В. Алентей

**Кӗт кӗтес**

Кӗт кӗтес!
Тăват кӗтес
Пирӗн ҫӗнӗ пурара.
Кӗт кӗтес!
Пӗрер кӗтес
Йышăнтăмăр хамăра.
Варринче —
Петюк пӗччен.
Унăн ҫук иккен кӗтес.
Кӗт кӗтес!
Вăйă пуҫланать каллех.
Кӗт кӗтес!
Тăват кӗтес...
Хăвăрт пул эс, йышăн эс
Тăват кӗтесрен пӗр кӗтес.

А. Артемьев

**Ҫамрăк хурăн**

Шурă хурăн, ҫамрăк хурăн,
Мӗншӗн эсӗ ешерместӗн?
Ҫут куҫҫуль тăкатăн хурлăн,
Ҫур кунне савма пӗлместӗн?
— Ирхи шуҫăм, каҫхи шуҫăм
Ҫутипе халь савăнмастăп:
Усăнайрӗ ҫамрăк пуҫăм,
Кăтра ҫулҫă кăлараймăп;
Пӗр чӗресӗре илӗртрӗ
Ман сӗткенӗн ыр шерпечӗ —
Вăл мана касса амантрӗ,
Ҫавăнпа йӗреп пӗчченҫӗ.

С. Асамат

**Тетте**

Амăш пӳрте кĕнĕ-кĕмен:
«Уляна, Анюк, салам!
Иксĕре пĕрер парне,
 Акă мăшăр пукане.
Атьăр-ха тумлантарас,
Питĕ хитре, чăвашла,
Савăннипе чăтаймасăр
Юр юрласа ярасла.
Касатпăр та çĕлетпĕр,
Шăрçаласа тĕрлетпĕр.
Ухтиярне шур шĕлепке
Тăхăнтарни килĕшет,
Селимене — кĕмĕл тухья,
Шӳлкеме, саппун, тевет.
Шукăль, капăр пултăр тесен
Тăрмашса ларма тивет», —
Терĕ савнă хĕрĕсене
Ыталаса чуптуса.
«Куç хăрать те, ал тăвать» —
Йăпăр-япăр ĕç пырать. —
Пуканисене вара
Çăпата-ши, атă-ши
Тăхăнтарсан лайăх-ши?
— Çăпатине ăна, хĕрĕм,
Ĕçе кайма сырнă тет,
Уявсенче тапăртатма
Сăран атă пулнă тет.
— Аттене, килнĕ-килмен,
Хамăр çума лартатпăр,
Тăхăнтарса тумлантарсан
Пурте пĕрле карталанса
Вăйă юрри юрлатпăр.

С. Асамат

**Садикра**

Эпӗр, пӗчӗк ачасем,
Садика ҫӳретпӗр:
Чăвашла та вырăсла
Калаҫма пӗлетпӗр,
Такăнмасăр вулама
Вӗренсе ҫитетпӗр.
«Атте, анне, папа, мама», —
Тесе ҫыру ҫыратпăр,
«Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ, тваттă,
Раз, два, три, четыре, пять», —
Чип-чиперех шутлатпăр.
Часах шкула каятпăр,
Часах пысăк пулатпăр.

С. Асамат

**Кӗвӗ**

Асанне-ҫăлкуҫ кӗсле калать,
Курăк-кинеми такмак калать,
Шăпăр янратать мучи йăмра
Савнă ялăмри пӗр айлăмра.
Шăп ларатăп йăпануллăн киленсе,
Ҫаврăм-ҫаврăм юрă-кӗвӗ вӗренсе

С. Асамат

**Ҫумăр ташши**

Пысăк ялăн ҫиййӗнче
Пысăк пӗлӗт чарăнчӗ,
Унăн йывăр кутамккинчен
Ҫумăр пӗрчи сапăнчӗ.

Шăпăр-шăпăр юрласа,

Тăпăр-тăпăр ташласа

Ак пĕри çĕре сикет,

Ак теприйĕ сирпĕнет...

Шăппи-шаппи, пăтти-пат,

Çара ури çăтти-çат.

Йывăç тăрри, пӳрт тăрри,

Курăк тăрри, шыв тăрри,

Çумăр пĕрчипе пĕр харăс

Тапăртатса-шапăртатса

Çатăлтатса юлтăр-и?..

С. Асамат

**Шыв хĕрринче**

Пысăк Якур шыва кĕрет,

Кăвакал пек чăмкалать,

Кӳлĕ тĕпне ик аллипе

Хыпашласа пăхкалать.

Пилĕк таран тăрă шыва

Пăтрататъ те пăтрататъ,

Шыв хĕрринчи ачасене

Шак чул тупса кăтартать.

Пĕчĕк Якур шыва кĕмест,

Хальлĕхе ишме пĕлмест.

Амăшĕ асăрхаттарнă —

Урине те йĕпетмест.

Е. Афанасьев

**Мĕншĕн?**

— Эс пĕлетĕн-и, Çеруш,
Эс чухлатăн-и, Çеруш,
Мĕн пирки-ши çулсерен
Мулкач шурă юр ӳксен?
— Çук, пĕлместĕп, каласам...
— Юр çиет вăл хĕл ларсан...

Е. Афанасьев

**Пулла**

Тухрăм эп вăлтапала,
Пăхрăм эп урамалла:

Анаталла, тăвалла.
Атя пулла, Ярмулла!

Шывĕ ăшă пулмалла,
Паян пула туртмалла.

Тыт аллуна вăлтуна,
Атя пулла, Ярмулла!

Е. Афанасьев
**Сана супăнь парас-и?**

Пĕчĕк Ира кĕтесре
Пуканисемпе вылять.
Юнашар ула кушак
Мăрласа питне çăвать.

Пирĕн Иран куласси —
Янăрать çинçе сасси:
— Эпĕ çурăм супăньпе,
Сана супăнь парас-и?

Е. Афанасьев
**Кентти чупать**

Пĕрре, иккĕ, виççĕ...
Пиллĕк, улттă, çиччĕ...
АН шутла эсĕ, анне,
Миçе утăм тунине.
Кентти пирĕн пултарать:
Утса мар, чупса пырать.

В. Ахун

**Çил армань**

Сăрт тăрринчи çил армань
Вăшăл-вăшăл çунатлă,
Çуначĕсем тĕрĕллĕ,
Тӳпеттейĕ чĕнтĕрлĕ,
Аркийĕсем хăюллă,
Пуставĕсем кăшăллă,
Ырçийĕсем çăнăхлă,

Алăкĕсем сăлăплă,
Пусмийĕсем шур чуллă,
Хӳри вĕçĕ — тĕвĕшлĕ.

В. Ахун

**Юман**

Йĕкĕр-йĕкĕр йĕкĕрпи,
Вăхăт çитĕ — шăкăрпи.
Нӳрĕ пулĕ — тымарпи,
Вĕлтĕр-вĕлтĕр çулçăпи.
Кайăп тӳррĕн ăнтăлса,
Ларăп ирĕк сарăлса.
Эп ӳсетĕп виç çĕр çул,
Эп чăтатăп çич çĕр çул.
Ятăм сумлă халăхра,
Кирлĕ-мĕн хуçалăхра.
Ман кашни турат шутра:
Çирĕп никĕс кил-çуртра,
Шĕвĕр çуркăн — тĕкмере,
Касмăк-сасмăк — нӳхрепре.

В. Ахун

**Уçăп хăйма юратать**

Уçăп хăйма юратать,
Умĕ тăрăх юхтарать.
Ай-ай-ай, ай-ай-ай,
Умĕ тăрăх юхтарать.

Алли-ури Мĕкĕтен —
Чикнĕ тейĕн тикĕте.
Ай-ай-ай, ай-ай-ай,

Чикнĕ тейĕн тикĕте.

Тимуç вара тап-таса,
Ытараймăн эс пăхса.
Чăнахах, чăнахах,
Ытараймăн эс пăхса.

Пирĕн пĕчĕк Варвари
Пит тирпейлĕ, куртăр-и?
Чăнахах, чăнахах,
Пит тирпейлĕ, куртăр-и?

В. Ахун

**Çимĕп, çимĕп теекен**

Кулюк кукăль пĕçерет,
Сантăр çисе пĕтерет.
Кулюк турăх кĕверет,
Сантăр ĕçсе пĕтерет.
Çимĕп, çимĕп теекен —
Çичĕ кукăль çиекен,
Çич кăвакал вăртакан,
Пичке шерпет ĕçекен.
Пурпĕрех ав тăранман:
— Парăр, — тет, — тата шăрттан!
Сантăр, Сантăр, Сантăркка —
Утаймасть те мăнтăркка.

В. Ахун

**Сăвăр**

Йышпа-йышпа пурăнать,
Шĕвик! Шĕвик! шăхăрать,
Çич уйăх вăл çывăрать,
Юр ирĕлсен — вăранать.
Çырма-çатра хĕррине,
Пĕр-пĕр тӳпем тăррине,

Чавса тăвать йăвине —
Сăвăр теççĕ кайăкне.

В. Ахун

**Чĕрĕп**

Сысна мар вăл — укçаллă,
Хурт пек кĕске туналлă.
Чуппийĕ йăпăр-йăпăр,
Уттийĕ кăпăр-кăпăр.
Инкек çитсен — çăмхаллă,
Ахаль чухне — ураллă.
Çĕлен унран пытанĕ,
Чикенлĕ ун сăхманĕ.
Тукмак ăна тытаймĕ,
Тилли те кап хыпаймĕ.

В. Ахун

**Шапа**

— Ак! ак! ак! Ак! ак! ак! —
Тет шапа шыв хĕрринче,
Ватă çирĕк айĕнче.
Вăл чĕнет пулăсене —
Кĕмĕл пек çупахсене. —
Тупрăм, — тет, — хитре мерчен
Çакă кӳлĕ тĕпĕнчен! —
Хăйĕн вара ним те çук,
Выляс килет ăшă чух.
Ав çанталăк ăшăтать,
Çавăнпа вăл кăшкăрать.

В. Ахун

**Тимĕрçĕ**

— Чанк! Чанк! Тимĕрçĕ!
— Мĕн кирлĕ?

— Кĕмĕл çĕрĕ.

— Мĕн тума?

— Çĕрĕлле вăй выляма.

— Чанк! Чанк! Тимĕрçĕ!

— Мĕн кирлĕ?

— Кĕмĕл сулă.

— Мĕн тума?

— Алă сулса ташлама.

— Чанк! Чанк! Тимĕрçĕ!

— Мĕн кирлĕ?

— Тимĕр тĕрен.

— Мĕн тума?

— Уй-хирте суха тума.

— Чанк! Чанк! Тимĕрçĕ!

— Мĕн кирлĕ?

— Ăста пуртти.

— Мĕн тума?

— Шурă-шурă пӳрт тума.

В. Ахун

**Шăпчăк**

Хурăнлăхра шăпчăк юрлать,
Сасси каять шыв тăрăх.
Сăрт хыçĕнчен хĕвел тухать,
Ăшши каять çĕр тăрăх.

В. Ахун

**Вир акрăм**

Кăмака çине вир акрăм,
Юрла-юрла ӳстертĕм.
Хăмăлĕ пулчĕ вăрман пек,
Шерепийĕ — тухья пек.

В. Ашкеров

**Сар пуç**

Çуркунне çарансенче
Е вăрман уçланкинче
Чи малтан илет тĕрек
Çӳллех мар сар пуç чечек.
Йăрăм-йăрăм ун çулçи,
Чăнахах та, чун уççи.
Ака уйăхĕ иртсен,
Симĕс курăк ешерсен,
Сарă-сарă çеçкине
Вăл сарать енчен енне.

В. Ашкеров
**Çеçпĕл**
Хура вăрман варринче
Çӳллĕ-çӳллĕ хырсем пур.
Çав хырсен сĕмлĕхĕнче
Çеçпĕл ятлă курăк пур.
Ир килсессĕн çуркунне
Кăвак чечек кăларать.
Кая юлнă çулхине
Шупка хĕрлĕ вăл пулать.

В. Бараев
**Митюк**

Митюк тухрĕ урама,
Хăй шăхличĕ шăхăртать:
Тӳрӳ-тӳрӳ! Ти-ти-ти!
Хăй шăхличĕ шăхăртать.

Митюк пĕлĕте пăхать,
Ай, мĕскер унта кĕрлет:
Тӳрӳ-тӳрӳ! Ти-ти-ти!
Ай, мĕскер унта кĕрлет?

Акă курчĕ, тĕлĕнет:
Унта самолет кĕрлет.
Тӳрӳ-тӳрӳ! Ти-ти-ти!
Унта самолет кĕрлет.

Хăвăртрах эпир ӳсер,
Летчиксем пулса вĕçер.
Тӳрӳ-тӳрӳ! Ти-ти-ти!
Летчиксем пулса вĕçер.

Б. Борлен
**Кушак**

Кушак мана куçне хĕсет,
Апат пĕçернине сисет.
Ялан пулмасть çисе какай,
Шăши çинчен манса ан кай.
Ура çумне те сĕртĕнет.
Пур — пар, пур — пар теме пĕлет.
Хайне вăл мĕскĕне хурать.
Куçран пăхса апат ыйтать.
Сĕтпе пĕçернĕ вир пăтти
Сана юрать-ши, йăпăлти?

Б. Борлен
**Куршанак**

Ма мана
Курсанах
Çыпçăнан,
Куршанак?

Хулана
Хăнана
Эс пырсан
Мĕн тăван?

Хулара
Хупахран
Шĕлепке
Кам çĕлет?

Санпалан
Çумăртан
Сыхланма

Кам пĕлет?

Б. Борлен
**Шăнкăрч**

Шăнкăрч халĕ юрламасть,
Юрлама та юрамасть:
Пысăк-çке çемйи ытла та,
Чĕпписем апат ыйтаççĕ,
Çăварне карса лараççĕ,
Амăшне кĕтсе шавлаççĕ.

Шăнкăрч вĕçĕмсĕр вĕçет,
Канăça пĕлми ĕçлет,
Пахчара тупать кăпшанкă,
Хурт шырать —
Курсан вут-шанкă.
Уй-хире çитме васкать вал,
Йăвине ăман тултать вăл.

Б. Борлен
**Чĕкеç**

Лупас айне
Йăва тăвать тăмран,
Чĕпписене
Сыхлать хурчăкаран.

Хӳри çинçе,
Ик вĕçлĕ — хачă пек.
Пĕве çинче
Вĕçет вăл кунĕпех.

Тăраниччен
Çисен чĕппи йĕмест,
Каç пуличчен
Вĕçет, ĕçлет чĕкеç.

А. Васин
**Пĕчĕк Анна**

Чарăнмасăр ĕсĕклет
Пирĕн пĕчĕкçĕ Анна.
Кам-ха ĕнтĕ çав тĕрлех
Кӳрентернĕ-ши ăна?

— Шыв хĕррипе пынă чух
Темле пĕчĕккĕ чĕр чун
Шăмпăрт! сикрĕ шывалла,
Путса вилчĕ пулмалла.
Пит шеллерĕм эп ăна, —
Тет йĕре-йĕре Анна.

— Ан йĕр уншăнах, лăплан,
Хăрамасть шапа шывран.
Вăл ишме пĕлет аван,
Пурăнать шывра ялан.

Н. Васанкка

**Мулкач**

Тĕмеске те тунката
Нимĕн те мар мулкача.
Карта урлă ялт сикет,
Кĕрет каять пахчана.
Пахча тулли купăста
Тĕлĕнтерет мулкача.
Купăстийĕн пуçĕсем
Шап-шурă та сарлака.
Хăшне çыртса пăхам-ши?
Хăшне татса каям-ши?

Н. Васанкка

**Чи-чи кăсăя...**

— Чи-чи кăсăя, кăсăя,
Шыв кӳрсемччĕ, кăсăя.
— Эп хăратăп кашкăртан,
Эп хăратăп упаран.
— Шыв кӳрсемччĕ, кăсăя,
Кашкăр халĕ шурлăхра,
Упи кайнă сунара.

Н. Васанкка

**Ка-ач, ка-ач качака**

Ка-ач, ка-ач качакин
Лăпăс-лăпăс сухалĕ,
Шĕп-шĕвĕркке мăйраки,
Кăкарам-и хурăнтан,
Кăшт ятлам-и хушăран:
— Çиме çи те çиессе,
Пăрах эсĕ сикессе,
Йывăçсене ан кăшла,
Ан хуç манăн кăмăла!

Н. Васанкка

**Нăрик тус**

Нăрик, нăрик, Нăркки тус —
Вăрман тарах вăл утать,
Симĕс курăк вăл татать,
Кунтăка вăл тултарать,
Унтан киле чуптарать.

Н. Ваçанкка

**Куян уçăлма тухать**

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă.
Уçăлма куян тухать те,
Сунарçи ăна курать тет,
Пăшалне персе ярать тет.
Еф! Уф-ф! Кĕрс те кĕрс-с!
Палт! йăванать куян тус.

Н. Ваçанкка

**Кукăр сăмса тăмана**

Кукăр сăмса тăмани —
Пысăк куçлă куками —
Тунката çине ларать,

Куçне-пуçне пăркалать,
Таплаттарать урипе,
Мăчлаттарать куçĕпе.

Н. Ваçанкка
**Маттурсем**

Ав кăмака умĕнче
Анчăк йăва пĕçерет.
Кăски урай варринче
Сухарисем вĕтетет.
Кушак çури пит çăвать,
Меуклетсе çаврăнать.
Ама кушак асанне
Тетте кĕпе хатĕрлет.
Чăпар чăхă тусĕнне
Пӳртне-çуртне тирпейлет.
Шăлса кайрĕ урайне,
Кайса хучĕ шăпăрне.
— Выртах, шăпăр, канса вырт,
Çӳп-çап шăлма хатĕр вырт!

Н. Ваçанкка
**Качака**

Каччин-каччин качаки

Чарусăра пултарать:
Карта умĕн уткалать,
Хушăк витĕр пăхкалать.
Кĕнчеле вĕç сухалли
Лăпăс-лăпăс сулланать.
Шĕпшĕвĕркке майраки
Тăрăнассăн туйăнать.

Н. Ваçанкка

**Çырла пиçнĕ вăхăтра**

Çырла пиçнĕ вăхăтра
Ирпе ирех тухрăмăр,
Тухрăмăр та утрăмăр
Ушкăнĕпех вăрмана.
Хăшин чĕрес алăра,
Хăшин пĕчĕк карçинкка.
Татрăмăр-çке çырлине те
Хĕп-хĕрлине, пиçнине.
Шакăлтатса каçхине
Эпир киле килтĕмĕр.
Эпир киле килтĕмĕр те
Сĕтпе çырла çирĕмĕр.
Тавах Униç инкене
Пирĕнпеле пынăшăн,
Тури Вылăн вăрманне
Пире ертсе кайнăшăн.

Н. Ваçанкка

**Чакак хăнисем**

Чак! чак! чакакĕ
Пăри пătти пĕçернĕ,
Пătти пиçнĕ-пиçменех
Хăнисене чĕнтернĕ.
Шăкăриех хăнисем:
Чĕнменнисем, чĕннисем
Килсе тулчĕç ун патне
Çакă ирхине.
Пĕрне кашăк тыттарать,

Тепĕрне хăй хыптарать,

Виççĕмĕшне чей парать...

Чакак хĕрсех хăналать.

Пĕрне кăна памарĕ,

Кăшт та кăмăл тумарĕ:

— Эсĕ ак мĕн, наян тус,

Калама çук уссăр пуç,

Кĕрпе те авăртмарăн,

Вутă та татмарăн,

Шывне те тултмарăн,

— Пая тивĕç пулмарăн.

Н. Васильева
**Çĕр çырли**

Симĕс бантиклă, умрах
Вăшт пытанчĕ, çакăнтах...
Кукку тĕрри ун çинче,
Хĕвел пăхать хăй çине.
Пичĕ хĕрлĕ, туп-тулли.
— Ку мĕн пулчĕ?
— Çĕр çырли.

М. Волкова

**Пĕлĕтсем, ăçта васкатăр?**

Пĕлĕт, пĕлĕт, ушкăн пĕлĕт!

Ăçталла чупатăр-ши?

Пурте тăхăннă шур çĕлĕк,

Эй, кама çухатрăр-ши?

Хăвалатăр, тем шыратăр,

Ĕмĕрхи çул çӳренсем.

Шур путексем пек пыратăр

Шыв енне кăшт ӳпĕнсе.

М. Волкова

**Кĕрхи вăрман**

Кăнтăралла иртет хур каййăк,
Çăка тăкать сар çулçине.
Тӳпе таса. Илемлĕ. Лаййăх.
Тĕтре хуплать лапамсене.
Шур хурăн ăшшăн та
типтерлĕн Пуç тайрĕ ылтăн кăтрине.
Пилеш курнать кăвар пек хĕрлĕ,
Сывлать çĕр анлă кăкрипе.
Хумханчĕ шĕшкĕ мана курнăн,
Татма чĕнет сар мăйăрне.
Юман йĕкел тăкать сатуррăн
Кĕрнеклĕ кĕр арки çине.

М. Волкова

**Ырă ĕне**

Кĕтӳ ярсан каçхине
Хамăр ĕне сассине
Эп таçтанах паллатăп,
Хапха уçма васкатăп.
Ĕне калать: «Му-ук, му-ук,
Мана илме хирĕç тух!
Хирте шăрăх пулнипе
Ĕçес килет кунĕпе.
Ăш хыпнине ирттерме
Пур-и лĕп шыв — çăнăх шыв?
Уншăн çутă витрене
Сĕт антарăп — су та су!»
Анне суса кĕрсенех
Эп ăшă сĕт ĕçетĕп.
Вара ырă ĕнене
Эп çитерме вĕçетĕп.

М. Волкова

**Ак мĕнле эп пысăккă**

Ирхине эп вăранатăп,
Хăвăрт-хăвăрт тумланатăп,
Аттепе пĕрле тухатăп,

Физзарядка эп тăватăп,
Музыка янранă майăн
Атте утать сулăмлăн.
Эп унран тăрса юлам-и? —
Ярса пусап çăмăллăн.
Хам сывлатăп вăраммăн,
Сарăлать ман кăкăрăм.
Ак мĕнле эп пысăккă!

М. Волкова
**Эх, савăнăç, савăнăç!**

Анне мана юратать,
Хĕрлĕ тутăр çыхтарать.
Тутăр хĕрри çӳçеллĕ,
Ун кĕтесси çеçкеллĕ.

Йăмăк пуплет ачашшăн,
Ялан манпа вылясшăн.
Унпа вăййа тухатăп,
Çунашкапа туртатăп.

Çуна сăртран хăй анать,
Сулнăкалла йăванать.
Савăнатпăр, кулатпăр,
Шур упа пек пулатпăр.

М. Волкова
**Хăрамастăп**

Вăкăр килет мĕкĕрсе,
Ял урамне çĕмĕрсе.
Йăраланать. У-у, йăтмак!
Вăйне ниçта хураймасть.

Ан тив, вăл маттур,
Хăрамастăп эп унран:
Карта хушăкĕ ман пур,
Вăкăр тухаймасть унтан.

М. Волкова
**Ма, çӳренĕм, кĕçенетĕн?**

Ма, çӳренĕм, кĕçенетĕн?
Мĕн ыйтатăн тулхăрса?
Утă-сĕлĕ çитерем-и,
Шăварам-и шăхăрса?

Çилхӳне пĕр çивĕтлем-и

Пурçăн лентăсем ярса?
Йĕнерлем те вĕçтерем-и
Таканна вут хыптарса.

М. Волкова
**Самолет**

Атте мана илсе пачĕ
Ик моторлă самолет.
Кĕмĕл тĕслĕ ун çуначĕ,
Варринче — маттур пилот.

Самолет, самолет!
Пулăп эп хамах пилот.
Хăпаратăп сак сине,
Çавăратăп моторне.

Мотор сасси кĕр-кĕр-кĕр!
Часрах ларса ĕлкĕрĕр!
Çитес çĕре çитĕпĕр,
Тем те курса пĕлĕпĕр.

А. Воробьев
**Анне**

Тем-тем сăмах каласшăн
Ача тăсать алне.
Вăл туртăнать хавассăн
Хăй амăшĕ патне.

Анне!
Çак ят чи çывăх,
Чи чаплă çĕр çинче.
Пурнать вăл ĕмĕр сывă
Кашни çын чĕринче.

А. Воробьев
**Март**

Çерçи пуххи йăмра çинче
Тем канашларĕ,
Пăр-р саланчĕ.
Çав сасăпа тумла вăранчĕ —
Çинçен юрлать çурт çумĕнче.

А. Галкин
**Кĕлеткесем**

Мĕн чухлĕ хут,
Мĕн чухлĕ хут
Касса вакланă Хĕветут!

Хутран вăл туна качака,
Вун икĕ сурăх, виç лаша, —
Мĕскер ку?
Вăт так тамаша!
Малта пырать ав пĕр така,
Хăй пуринчен те мăнтăркка, —
Хуплана лартнă кантăка!

А. Галкин
**Тимĕр шапа**

Кĕлетки — лаптак тукмак,
Урисем — çавра тукмак.
Кăштăрт-кăштăрт шутарса,
Чăштăрт-чăштăрт тутарса
Сӳрĕккĕн аран утать;
Тем шырать: кăн-кан пăхать.
Тимĕрех çав тимĕркке —
Ватă сын пек мĕштĕркке.

А. Галкин
**Шыв хĕрринче**

Тăтăм çеç пеме чулпа
Çырмари пĕр шапана,
Сантăр çирĕп алăпа
Тытрĕ çатăрах мана:

— Ма тиветĕн эс ăна?! —
Терĕ вăл. — Сана хăвна
Лектерсессĕн çак чулпа
Лайăх-и, шутла çавна!..

Асăрхарĕ курăнать
Пĕвери шапа çакна.
— Ак-ак, — терĕ, — ак-ак-ак!
Кĕрт мунча хăйне пăртак.

А. Галкин
**Йăмăк**

Йăмăк выртрĕ çывăрма:
Кăнтăрла кирлех канма.
Пысăк ĕç паян вăл тунă —
Кĕпине хăех-çке çунă!

А. Галкин
**Çитрĕç сивĕсем**

Çитрĕç сивĕсем,

Шăнчĕç пĕвесем.

Мамăк пек шап-шур

Ӳкрĕ кăпăш юр.

Выртрĕ çĕр вара

Çывăрма тинех,

Сивĕ çапасран

Тăлăп витĕнсех.

А. Галкин

**Марине**

Пысăк хуйхă Маринен:
Пукани сыв мар иккен.
Сунаслать те сунаслать,
Пит вĕри, аран сывлать.

Пултаруллă Марине:
Хăй вăлэмеллет тусне,
Ма тесессĕн Марине
Юратать пуканине.

А. Галкин

**Ик автан**

Икĕ пĕчĕк сар автан
Тытăннă вăрçма паян:
Эх, сăхаççĕ, эх, чаваççĕ
Пĕр-пĕрне куçран-пуçран.

Илтĕм те патак — пĕрне
Хăваларăм кил енне...
— Мĕн пустуй çапăçмалла?
Тус-юлташлă пулмалла.

А. Галкин

**Турник çинче**

Турник лартрĕç картишне.

Ирсерен эп ун çине

Хăпаратăп

Е анатăп,

Вылянап çине-çине.

Тĕлĕнеççĕ кӳршĕсем,

Савӑнаҫҫӗ ял-йышсем.

— Пирӗн Юрик —

Физкультурник! —

Теҫҫӗ кӑмӑллӑн вӗсем.

Д. Гордеев

**Пӑравус**

Пукан сине пукан —
Ку ӗнтӗ пӑравус.
Петюк — руль тытакан.
Асту, пуҫна ан ус!

Хаваслӑ машинист
Пӑхать инҫе-инҫе.
Ванюш, мескершӗн эс
Йӗретӗн айккинче?

Йӗме сӑлтав сук мар.
Руль тивӗҫмест ӑна.
Калать вӑл Петюка:
— Вылясшӑн ху кӑна...

Ванюш халь руль тытать.
Асту, пуҫна ан ус!
Епле ав ыткӑнать
Хӑватлӑ пӑравус.

— Ванюш, ҫитет-тӗр. Чар!
Часрах ан, эп ларам. —
Ванюш анасшӑн мар,
Петюк тӗртсе ярать.

Хӳхлеҫҫӗ иккӗн тан.
Ҫимун пичче кулать:
— Татах тӳнтер пукан
Ик пӑравус пулать.

Д. Гордеев

**Аленка теттисем**

Хушка кушак, путек,
Сар кӗпеллӗ пукане —
Харӑс темиҫе тетте
Хучӗ вӑл сӗтел ҫине.

Итлемеҫҫӗ теттесем.

Кушак ўкрĕ урайне.
— Эп сана, Мăр-мăр! — тесе
Вăл кăнтарчĕ пўрнине.

Пукане çыхасшăн мар
Сар çеçкеллĕ тутăрне.
— Пултаратăн вĕт шăнма, —
Тет Аленка теттине.

Упине, çăмламасне,
Ташлама хушать вĕçрен.
Леш силлет вара пуçне
Пружинсем пушаниччен.

Попугай, кăвак сăмса,
Аптратать Аленкăна,
Ни тăмасть вăл çакăнса,
Йăванма пĕлет кăна.

— Лар кунта! — пукан çине
Хучĕ вăрăм сăмсине.
Попугай теттесене
Тўнтерет, персе анать.

— Ан пăс эс хитре вăйййа, —
Тет Аленка вĕрентсе.
Ашкăнчăк попугая
Тăрататъ вăл кĕтесе.

Д. Гордеев

**Тĕлĕнтермĕш**

Пирĕн вăйă кулăшла.
Тĕлĕнтермĕш пит нумай.
Йытă ташлать чăвашла
Купăсне калană май.
Ик уран çўрет така.
Шăхличне калать ĕне.
Кролик ватă кушака
Сунара пыма чĕнет.
Слон йăваннă месерле,
Кăчи-мачи хуçкалать.
Вĕрлĕк тăрăх вĕçесле
Бегемот ав куçкалать.
Пулă сĕтĕрнĕ çуна,
Лашана ярăнтарать.

Тилĕ тупнă та çунат
Çерçирен вĕçсе тарать...

Д. Гордеев
**Тытса юрат**

— Пукане валли çĕлерĕм
Çĕн саппун. Аннеçĕм, кур.
Аркине те эрешлерĕм.
— Пултаратăн. Пит маттур.
— Кив теттесене юсарăм.
Халь упан та пуçĕ пур.
Мулкача çуса тасатрăм.
— Пултаратăн. Пит маттур.
— Урайне те, кур-ха, çурăм.
Астуса ут, ан хурат.
— Пултаратăн эс, маттурăм!
— Маттур мар... Тытса юрат.

Д. Гордеев
**Петюкпа мăлатук**

Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!
Иртенпех шаккать Петюк.
Каскалать те çапкалать —
Çĕнĕ пӳрт ӳссе ларать.

Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук! ,
Туклатать çеç мăлатук.
Ĕшенмесĕр ăсталать —
Çĕн гараж кирлĕ пулать.

Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!
Тăрмашать кăна Петюк.

Тук, тук, тук!
Пӳрнене
Çатлаттарчĕ мăлатук.

— У-у-у! — йĕрет Петюк,
— Ма усал эс, мăлатук,
Туклатмашкăн кăмăл çук.
Туклатмасть халь мăлатук,
Туклатмашкăн кăмăл çук.
— Эс мана тытма вĕрен —
Кун пек пулмĕ ӳлĕмрен!..
Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!
Ĕç пуçлать каллех Петюк.

Д. Гордеев

**Ракета**

Ӳплештернĕ ик витре,
Айлăн-çийлĕн хунă.
Ку ракета. Пĕкĕрен
Унăн рульне тунă.

Чупкалаççĕ тавралла
Иккĕн-виççĕн харăс.
Кĕç ракета каймалла:
Пурте хăвăрт ларчĕç.

Çĕкленмешкĕн кăшкăрса
Коля ирĕк пачĕ.
Ачасем ав хăраса
Куççене хупаççĕ.

Ӳсчĕр-ха айванскерсем,
Космоса çĕкленĕç.
Халĕ куç хупакансем
Ун чухне шикленмĕç.

В, Давыдов-Анатри

**Пакша**

Турат ҫинчен турат ҫине
Пакша хавассӑн сиккелет,
Чанк! тӑрататъ хӑлхисене,
Сас-чӳ ҫук-ши тесе итлет.
Кӗрхи кунта шӗшкӗлӗхре
Пакша васкать, апат пухать,
Пуш хӑвӑла кӗре-кӗре
Сар мӑйӑрне хурса тухать.

В, Давыдов-Анатри

**Пулӑра**

Ҫырма хӗрринче,
Йӑмра аиӗнче,
Ларать Лариван
Иртенпех паян.

Пӑхать вӑлтине,
Юсать ӑманне.
Йӑл кулать чунтан
Пулли ҫаклансан.

В, Давыдов-Анатри

**Ма йӗртетӗн?**

Тимуш темшӗн юратмасть,
Теттесене упрамасть.
Вӑл мулкача аллинчен,
Шур упана уринчен
Тапса туртать, хӗрхенмест,

Мĕн тунине хăй пĕлмест.

— Тимуш, мĕншĕн çĕмĕрен,

Теттесене ма йĕртен?

В. Давыдов-Анатри

**Сăпка юрри**

Пепкеме,
Чĕппĕме —
Ыйхине,
Тутлине.
Сарă уйăх хăпарать,
Йăлтăр-йăлтăр курăнать.

Улмине,
Хĕрлине —
Ачине,
Танине.
Пĕр сас-чӳ çук таврара,
Çывăр канлĕ сăпкара.

Тĕлĕкре
Тӳпере
Эс вĕçен,
Хĕпĕртен.
Сывлăш уçă, тап-таса, —
Ярăн хыттăн талпăнса.

Юррине,
Хитрине —
Пепкеме,
Чĕппĕме.
Çывăр, чунăм, çут иртчен,
Пӳрте шуçăм кĕриччен.

В. Давыдов-Анатри

**Параппан**

Атте паян пасартан
Илсе килчĕ параппан.
Пат! Пат! Параппан
Пăнтăртатать пит аван.

В. Давыдов-Анатри

**Анне килчĕ кăнтăртан**

Пирĕн анне кăнтăртан,
Каннă çĕртен, Кавказран,
Илсе килчĕ мандарин,

Иçём çырли, апельсин.
Тутлă шăршă халь кĕрет
Пирĕн çутă пӳлĕмре —
Ăшă кăнтăр пĕтĕмпе
Килнĕ тейĕн аннепе.

В. Давыдов-Анатри

**Путене**

Йăва тунă путене
Сарă тулă пуссине.
Сарă тулă хумханать,
Путенийĕ авăтать:
Пĕт-пĕлтĕк,
Пĕт-пĕлтĕк,
Эп — путене,
Пĕлен тĕк.

В. Давыдов-Анатри

**Нарт-нарт кăвакал**

Нарт-нарт кавакал
Кӳлĕ тавра çаврăнать,
Ик çунатне шарт çапать.

Нарт-нарт кавакал
Шыва чăмать, çухалать,
Лăпкă шыва хумхатать.

Нарт-нарт кавакал
Шывран тухать, савăнать,
Сар сăмсине вылятать.

Нарт-нарт кавакал
Чĕпписене йыхăрать,
Киле ертсе саврăнать.

В. Давыдов-Анатри

**Упа**

Упа, упа, утаман,
Ăна туна шур юртан.
Ăна туна пит аван
Пĕчĕк ача, сар Иван.

В. Давыдов-Анатри
**Ыйхă чăпти**

Вăхăт чупать малалла,

Кĕҫех ҫитет кăнтăрла.
Пĕр Петĕр ҫеҫ ыйхăран
Каличчен те вăранман.

— Тăр, — тет ашшĕ ачине, —
Тăр, — тет ыйхă чăптине.
Кĕвел кулать тӳпере,
Вăл та: «Тар», — тет Петере.

В. Давыдов-Анатри
**Сар автан**

Пĕр ирхине автанран
Ыйтать пĕчĕк шăллăм ман:
— Ки-ки-ри-кук сар автан,
Мĕншĕн хытă авăтан?
— Ҫĕнĕ вите шур чултан
Туса пачĕҫ, — тет автан,
— Ҫавăнпа та эп паян
Савăнатăп пур чунтан!

В. Давыдов-Анатри
**Мĕншĕн тутлă?**

Мĕншĕн тутлă пан улми,
Мĕншĕн тутлă ҫĕр ҫырли,
Мĕншĕн тутлă хурлăхан?
Хамăр лартса тунăран,
Хĕвел тĕслĕ пулнăран.

В. Давыдов-Анатри
**Тилĕ**

Ҫывăр, чунăм, ҫут ирччен
Пӳрте шуҫăм кĕриччен.
— Тиллит-тиллит тилĕ тус,
Ăҫта каян, тилĕ тус?
— Васкап эпĕ ялалла,
Манăн чĕпсем тытмалла.

— Ах! Пĕлмен-çке халиччен
Эсĕ усал иккенне.
Эп систереп сан çинчен
Хамăр касри вĕшлене.

В. Давыдов-Анатри

**Качака**

Кача ура качака,
Икĕ вăрăм мăйрака,
Кĕрсе кайнă чăлана,
Тăкса янă хăймана.
Качăр-качăр качака,
Кукăр-кукăр мăйрака,
Кĕнĕ кайнă пахчана,
Çинĕ тутлă кăшмана.
Мекек-мекек качака,
Картлă-картлă мăйрака,
Картана хурам хупса —
Ан çӳре тек тустарса.

В. Дмитриев

**Хĕвел, тух!**

Хĕвел, тух! Хĕвел, тух!
Çумăртан ма пытанан?
Вăйлă çумăр çунă чух
Тӳперен ăçта анан?
Пит хавас-çке санпа чух,
Çутăрах та ăшăрах.
Хĕвел, тух! Хĕвел, тух!
Çумăр иртнĕ паçăрах.

В. Дмитриев

**Кушак**

Пирĕн пур хура кушак,

Питĕ юрататьăшша.
Çак муркка ялан вара
Кăмака çинче ларать.
Хӳрине çумне хурать,
Йĕкĕлтет унпа пире.
Те вылять, те çывăрать —
Вылянать ялан хӳре.
Эпир выртнă чух вара
Чăрмалать вăл ураран.
Эпĕ тытрăм хӳререн —
Ячĕ илчĕ пӳрнерен!

В. Дмитриев
**Çĕр мулкачĕ**

Çер мулкаче печекскер
Чупаймасть анаталла.
Тăвалла кайсан чипер...
Тытас çук — ан хăвала.
Ма тесен ун урисем
Питĕ вăрăм — кайрисем.
Малтисем ун кĕскерех,
Хăй мулкач евĕрлĕрех.

В. Дмитриев
**Вăйă**

Ку — каять,
Ку — чупать,
Ку тарать те, ку юлать.
Эп таратăп,
Эс те тар,
Ку тытаканни пулать.

В. Дмитриев
**Эс пытан, эп пытанатăп**

Эс пытан,
Эп пытанатăп.
Эс каятăн,
Эп каятăп.
Эс чупатăн,

Эп чупатăп.
Эс шыраканни пулатăн.
Сан куçна халь хупмалла,
Халь эс ан пăх кунталла.
Эп тарса халь пытанатăп,
Пытансан çеç сас паратăп.

В. Дмитриев
**Верук-чиперук**

Ир тăрать те çăвăнать,
Типтерлет çӳçне Верук,
Садике пуçтарăнать
Пирĕн Верук-чиперук.

Пичĕ-куçĕ тап-таса,
Хăй ялан çӳрет кулса,
Ун юратнă япали:
Супăнь, щетка, ал шăлли.

В. Енĕш
**Тĕтре**

Сĕт евĕр çап-çара тĕтре
Упаленет ирпе çĕртре.
Упаленет вăл, пĕтĕрнет,
Питрен ачашшăн сĕртĕнет.
Кĕçех хĕвел курăнмалла —
Тĕтре тарать çырманалла.
Шыв пек юхать, тĕлĕнмелле,
Унпа пĕве хăть пĕвеле.

В. Енĕш
**Тăван çĕршыв**

Çаран хитре,
Çаран хитре
Пин-пин чечек унта
Ешернĕрен.
Çĕршыв пуян,
Çĕршыв пуян
Çĕр тĕрлĕ халăх
Килĕштернĕрен.

Пĕр чечекпех,
Ик чечекпех
Чечек çыххи хитре
Пулаяс çук.
Тăванлашса
Пурăнмасан
Çĕршыв çапла пуян
Пулаяс çук.

Г. Ефимов

**Çуркунне, çуркунне...**

— Çуркунне, çуркунне...
Мĕнле çитрĕн ку енне?
— Кайăк çунатти çинче
Ларса пытăм темĕнччен.
Тракторсен кĕрлевĕнче,
Вăштăр çил юхăмĕнче
Эп çӳрерĕм кунсерен.
Плуг тимри йăлтăртатать,
Хирелле текех пăхать.
Тимĕр шăллă сӳресем
Сӳрелесшĕн, пĕлĕрсем.
— Çуркунне, çуркунне!
Çитнĕшĕн тавах сана!

А. Ĕçхĕл

**Анне**

Пире кам ачашшăн
Лăпкать пĕчĕкрен,
Чипер çын тăвасшăн
Çунать чĕререн?
Кам тĕлĕкĕнче те
Курать-çке пирех,
Килте пуринчен
Тăрать иртерех?

Кам ир вучах чӗртнӗ —

Апат пӗҫерет,

Ӗне суса кӗнӗ,

Ӑш сӗт ӗҫтерет?

Кам пултӑр? Пӗлеҫҫӗ

Туссем вӑл камне:

Вӑл пирӗн телей-ҫке,

Вӑл — пирӗн анне.

К. Иванов

**Сентти**

Чипер ача Сентти пур,
Чупса ҫӳрет урамра.
Кӗвентине утланса
Ача вылять лашалла.

Аслӑ урам тӑршшӗпе
Чиксӗр тусан кӑларать,
Хура чикан пек хура
Каҫпа килне таврӑнать.

Чипер ача Сентти пур,
Чупса килет лашипе,
Хӑйӗн пӗчӗк чӗлхипе
Пакӑлтатать инкӗшпе.

К. Иванов

**Сентти вӑййи**

Вут пек хӗвел выляса
Ҫӳл тӳпене хӑпарать,
Хуллен-хуллен ярӑнса
Кӑнтӑрлана сулӑнать.
Сентти килет сиктерсе
Кӗвентине утланса,
Инкӗш патне ҫӗмӗрсе
Кӗрсе кайрӗ ахӑрса.

Ҫапать паттӑр лашине
Хӑй аллинчи хуллипе,
Ӑнсӑртранах инкӗшне
Тапса илет урипе.

А. Ильин

**Тӑмана**

Тӗвик-тӗвик тӑмана
Каҫ шӑплӑхне юратать,
Тӗвиклетсе пӗр кана
Ӑна хӑех йӑлт пӑсать.

Ҫывӑрасчӗ лӑпланса
Шуҫӑм ҫути киличчен,
Кайӑксенчен уйрӑлса
Пӗччен вӗҫсе ҫӳриччен.

Тӗвик-тӗвик тӑмана
Тавҫӑрасшӑн мар ҫакна.
Тӗвиклетет ав каллех,
Тӗвиклетет ҫӗрӗпех.

А. Ильин
**Тиха**

Кунӗпех ҫаран ҫинче
Эрнери тиха ҫӳрет,
Ешӗл курӑк хушшинче
Вӗлт те вӗлт! вӑл сиккелет.

Е пуҫне ухать сатур
Сакӑлта уралласкер.
Амӑшне калать пек: «Кур,
Ывӑлу сан маттурскер».

А. Ильин

**Кам вӑранать чи малтан?**

— Кам вӑранать чи малтан? —
Ыйтрӑм эпӗ шӑпчӑкран.
— Шӑплӑх, — терӗ вӑл мана.
— Кам вӑранать чи малтан? —
Ыйтрӑм эпӗ шӑплӑхран.
— Ҫулҫӑ, — терӗ вӑл мана.
— Кам вӑранать чи малтан? —
Ыйтрӑм эпӗ ҫулҫӑран.
— Йытӑ, — терӗ вӑл мана.
— Кам вӑранать чи малтан? —
Ыйтрӑм эпӗ йытӑран.
— Алӑк, — терӗ вӑл мана.
— Кам вӑранать чи малтан? —

Ыйтрӑм эпӗ алӑкран.
— Аннӳ, — терӗ вӑл мана.
— Кам вӑранать чи малтан? —
Ыйтрӑм эпӗ аннерен.
— Автан, — терӗ вӑл мана.
— Кам вӑранать чи малтан? —
Ыйтрӑм эпӗ автанран.
— Ку-ка-рекук-карек-кук!
Кам-ши чӑнах, Кетерук?

А. Ильин

**Кам мӗн тӑвать?**

— Кӑчкӑ, эсӗ мӗн тӑватӑн?
— Çулçӑпа эп калаçатӑп.
— Хурӑн, эсӗ мӗн тӑватӑн?
— Кӑчкӑ сӑмахне тӑнлатӑп.
— Петӗр, эсӗ мӗн тӑватӑн?
— Хурӑн тӑрне улӑхатӑп.
— Шӑнкӑрч, эсӗ мӗн тӑватӑн?
— Вӗлле çакнине сӑнатӑп.
— Хӗвел, эсӗ мӗн тӑватӑн?
— Шӑнкӑрч юррине тӑнлатӑп.

А. Ильин

**Атьӑр шутлӑпӑр татах**

— Эрнере шӑп ултӑ кун, —
Тупӑшсах калать Çимун.
— Йӑнӑшатӑн, — тет Антун, —
Улт кун мар çав, пилӗк кун.
— Улттӑ! Улттӑ! Пиллӗк мар!
Ак тӑнла шутланине.
— Тытӑнать хӑй вӑр та вар
Калама кунсен ятне:
— Тунти кун, ытлари кун,
Малалла вара юн кун,

Эрне кун, кĕҫнерни кун,
Улттăмĕш кун — шăмат кун.
Сехет ҫурă е ытла
Тупăшаҫҫĕ халь вĕсем,
Пĕлес ҫук, паллах, капла
Кун шутне ҫак ачасем.
Пулăшар-и ушкăнпа
Тупсăмне татса пама.
Килĕр, пурте ушкăнпа
Тытăнатпăр шутлама:
Тунти кун — пĕрремĕш кун,
Иккĕмĕш — ытлари кун,
Виҫҫĕмĕш — чăнах юн кун,
Вăл иртсен — кĕҫнерни кун.
Шутпала, атьсем, ҫак кун
Шăп тăваттăмĕш пулать.
Тепĕр кунĕ — эрне кун.
Вăл хăш кун-ха? Кам калать?
Малалли кун — шăмат кун,
Тĕрĕс, улттăмĕш шутпа,
Пур татах та тепĕр кун,
Паллашар-и халь унпа?
Вăл, туссем, вырсарни кун,
Асра тытăр яланах.
Эрнере шăп ҫичĕ кун,
Атьăр шутлăпăр татах.

А. Ильин

**Килĕр ăмăртма!**

— Кам халь ăмăртма шутлать
Ҫавă тăтăр ушкăна!
Чупмалли, — Петюк калать,
Ик урам хушши кăна.
Пурте килĕр хăвăртрах,
Тытăнăпăр ăмăртма!
Курăр акă хăвăрах:

Пит аван çарран чупма.

Ăмăртаççĕ ачасем,
Хăшĕ тухĕ-ши мала?..

А. Ильин
**Ик ăнлавлă сăмахсем**

Çакрăм вучаха ХУРАН.
Шăллăм, эс кăвайт ХУРАН.
Сана, шăллăм, миçе ХУТ
Эп каларăм: ме шур ХУТ.
Ыйхăран паян ТĂМАН
Шур сухаллă çил-ТĂМАН.
Эсĕ мар-и халь, АНТУН,
Ашкăнатăн? Çук, АН ТУН.
Лартăм вулама, ÇЫРМА,
Урамах чĕнет ÇЫРМА.
*   *   *
Çил тулта кĕрлет кĕр-КĔР,
Çывхарсах пырать-мĕн КĔР
Шăллăм, халĕ мĕн ТĂВАР?
Çук пĕр чĕптĕм те ТĂВАР.
Пур татах та сăмахсем,
Икĕ ăнлавлăскерсем.
Вĕсене пĕрле шырар,
Малалла вăййа тăсар.
Кунта аксаччĕ пĕлтĕр КАНТĂР,
Кăçал акмарăмăр, çĕр КАНТĂР.

А. Ильин
**Машăпа автан**

— Куккурук-кук! мĕн тени?
Ыйтрĕ пĕчĕк Маша.
— Вăл пире ыр кун сунни,
Ăнлантарчĕ ашшĕ.

— Апла эпĕр те ăна
Ыр сунса илер-и? —
Маша хăй те автана:
— Куккурук-кук! — терĕ.

А. Ильин

**Ĕне муклатать**

Урамра ĕне тăрать,
Чарăнмасăр муклатать:
— Мук! Мук! Му-ук!
Алăк уç, Куçук!
Илсе килтĕм сан валли
Ăшă сĕт витре тулли.

А. Ильин

**Эс мĕн ятлă?**

Эс мĕн ятлă? Ка-ка-ка!
Эс мĕн ятлă? Нарт-нарт-нарт!
Эс мĕн ятлă? Чим-чим-чим!
Эс мĕн ятлă? Хам-хам-хам!
Эс мĕн ятлă? Мăр-мăр-мăр!
Эс тата? Нăрик-нăрик.

Тĕлĕнсе тăрать Прахур:
Кур-ха, темле ят та пур.
— Халь пĕрле выляр-и? — тет.
Шавлă ушкăн килĕшет.
Вăйă картине тăраççĕ,
Выляма часах пуçлаççĕ.

А. Ильин

**Сивĕ, эсĕ ăçтан?**

— Сивĕ, эсĕ ăçтан?

— Çурçĕртен.

— Ăшă, эсĕ ăçтан?

— Кăнтăртан.

— Çутă, эсĕ ăçтан?

— Тухăçран.

— Тĕттĕм, эсĕ ăçтан?

— Анăçран.

А. Ильин

**Уйăх**

Тĕлĕрет йăмраллă ял,
Тутлăн, канлĕн çывăрать.
Уйăх тӳпере шăвать.
Вăл хăçан, хаçан канать?
Асаннен пек, ыйхи çук,
Çĕрĕпех-çке куç хупмасть.
Эп ăна сунап ыр çул,
Эп сунап ăна ыр каç.

И. Исмуков

**Хĕрлĕ астра**

Тăм ӳкрĕ, çумăр асрĕ,
Лӳшкерĕ пĕр кана.
Ан парăн, хĕрлĕ астра,
Йĕпе-сапа куна.
Эс çуллахи хĕвелĕн
Пĕр ванчăкĕ пулса
Ыр туйăмсем парнелĕн
Анне пек йăл кулса.

Н. Ишентей

**Чуччу кашти хурама**

— Чу-чу!
— Чу-чу!
Чуччу кашти хурама,

Пурте тухăр урама.
Чуччу кашти авăнсан
Ярăнма тата аван.

— Чу-чу!
— Чу-чу!
Анне — ачаш тăвакан,
Атте — чуччу тăвакан.
АН шикленĕр ярăнма —
Хуçăлас çук хурама.

Н. Ишентей
**Уйăп**

Тусăмсемĕр, уйăпа паллатăр-и?
Ав палан çинче ларать. Куратăр-и?
Тăккаланă сине чух çырлисене —
Хĕп-хĕрлех хĕретнĕ хăй пĕсехине.

Н. Ишентей
**Сассăр шăнкăрав**

— Шăнкăрав манерлĕ лантăш
Татрăм, — терĕ манăн тантăш.
Сулкаларĕ вăл ăна. —
Янăраттăр вăрмана!

Эп те лантăша тăнларăм:
Шăнкăравĕ шарламарĕ.
Ӳкрĕ кĕмĕл пек тумла —
Сассăр йĕчĕ пулмалла.

Н. Ишентей
**Сарă чăх**

Сарă-сарă чăх пур пирĕн.
Какалать вăл касăн-ирĕн,
Сар кĕпи ун пурçăнран,
Шӳлкемийĕ ылтăнран.

Уртнă сарă ум çакки.
Хĕм сапать хăлха çакки.
Ах, юрать-ха йăлтăрти
Ылтăн мар ун çăмарти.

Питĕ-питĕ хырăм выçрĕ
Мечĕкле вылянă хыççăн.
Сарă чăх çăмартине
Астивес-и, асанне?

Н. Ишентей

**Чечекпипе Чӗвӗлпи**

Пӑрӑва ҫаран ҫинчен
Хуса килчӗ Чечекпи.
Пӳрт ҫамкинчи йӑвинчен
Сас парать чӗкеҫ чӗппи.
— Эпӗ — Чӗвӗл-чӗвӗлпи.
Атя иккӗн калаҫар.
— Манӑн ятӑм Чечекпи, —
Тет хаваслӑ хӗр ача.
— Тунсӑхларӑм, Чечекпи.
Пушӑ вӑхӑт сан пур-и?
— Пӑрӑва хупсан, эппин,
Юрлӑпӑр чӗкеҫ юрри.

Н. Ишентей

**Уяр**

Хӗрлӗ-хӗрлӗ, чӑпар
Пӗчӗкҫеҫҫӗ уяр —
Ман пӳрне вӗҫӗнчен
Анчӗ курӑк ҫине.
Ҫумӑра сиснӗрен
Хыпаланчӗ килне.
Хӗрлӗ-хӗрлӗ, чӑпар
Пӗчӗкҫеҫҫӗ уяр
Ав пытанчӗ епле!
Темех мар ҫурт ҫукки:
Шӑнкӑрав чечекки —
Питӗ селӗм ӳпле.

Н. Карай

**Ҫырлана кайсан**

Мӗскер пулнӑ Сантӑра? —
Макӑрать уҫланкӑра.
Пиччӗшне чӗнет:

— Пи-и-чче-е-е!
Янӑрать вӑрман:
«Пи-и-чче-е-е!»
Ҫырлара пиччӗшӗнчен
Ҫӗтсе юлнӑ вӑл пӗччен.
Ҫил килет те Сантӑра:
— Ан хӑра, —
Тет, —
Ан хӑра.
— Хӑрамасӑр!
Ҫывӑхрах
Пат! ӳкет турат ҫӗре.
Ҫулҫӑ чаштӑр тусанах
Чарӑнать тапма чӗре.
Хӗвел хурӑн тӑрринчен
Анчӗ шӗшкӗлӗх ҫине,
Шӑппӑн тӗмӗ хыҫӗнчен
Тилӗ тухрӗ ун умне.
— Пӗчӗк тусӑм, Ан хурлан. 4
Ма йӗрсе куҫна пӑсан?
Кӗҫ килет пиччӳ. Унччен
Ҫул хӗрне тухса ларар.
Хам та ыртӑм ҫырлара, —
Вӑл йӑпатрӗ Сантӑра
Лӑпкаса ҫурӑмӗнчен.
Тухса ларчӗҫ ҫул хӗрне —
Пысӑк тунката ҫине.
Тилӗ лӑпкӑн юптарса
Тӗрлӗрен юмах калать.
Куҫне мӑч та мӑч хупса
Сантӑр тутлӑн анаслать.
— Юмах пӗтмӗ.
Кӑшт канар, —
Терӗҫ,
Выртрӗҫ юнашар.
Ыйхӑ пусрӗ Сантӑра —
Сантӑр путрӗ ыйӑха.

Сас илтсессĕн çывăхра
Тилĕ чăмрĕ чăтлăха.
Çырларан килекенсем
Асăрхарĕç Сантăра,
Тăчĕç тунката тавра.
— Кам ку? — теççĕ.
— Хăш ялсем?
Тен, вăл хамăр патрисем?
Пысăк тунката çинче
Сантăр канлĕн çывăрать.
Пĕчĕк çӳхе тутинче
Ăшă кулă палăрать.

Н. Карай
**Упа çури**

Пысăк чăрăш айĕнче,
Тарăн шăтăк умĕнче,
Макăрать упа çури.
Çывăртăр тесе юри
Ана амăшĕ çĕрле
Вăратман тет ыйхăран.
Утара
Хăйпе пĕрле
Пыл çиме илсе кайман.

Н. Карай
**Урине**

Такăнчĕ те Урине
Ыраттарчĕ урине.
Сасăпах вăл макăрать.
Ăна ашшĕ йăпатать:
«Ан йĕр-ха эс,
Урине,

Тӳрлететпĕр урине.
Урине мар,
Марине
Ыраттарнă урине».
Пирĕн пĕчĕк Урине
Тухнă вăйă картине.

Аллисене шарт! çапать,
Урисене тăрст! тапать,
Питĕнче хĕвел вылять,
Курăр,
Тути йăл купать.

Н. Карай
**Автан**

— Кунсерен ӳссе пыратăп,
Эп ӳссен кам пек пулатăп? —
Ыйтрĕ чĕпĕ автанран.
- Эс-и? -
Тет ăна автан. —
Ман пекех, паллах, пулан:
Кăкăр урлă шӳлкемеллĕ,
Çырла тĕслĕ тӳпеттейлĕ,
Кăлтăрмач пек шур хӳрелле,
Çĕр чавма —
Çинçе чĕрнеллĕ...
Ус-ха,
Ус-ха эс,
Петюк,
Кăт-кăт-кăт,
Кукуруку-у-ук!

Н. Карай
**Така**

Пĕчĕк Петĕр
Такăнать,
Тин утма вал
Хăнăхать.
Хăй çапах та
Такана
Çинçе хулăпа
Юнать.
Тăрăс! сиксе
Вырăнта
Петĕре калать
Така:
— Хирĕç тăрăп-ха,
Тăхта.
Ӳстĕр çеç кăшт
Майрака.

А. Кăлкан

**Пĕчĕк Гена**

Халĕ Гена пĕчĕк çеç,
Пĕчĕк те — чĕлхи чĕкеç;
Чĕвĕл-чĕвĕл калаçать,
Сăвăсем ăста калать.

Юратать вăл выляма —
Шыв сине карап яма,,
Хĕрлĕ мечĕк сиктерме,
Хут ракета вĕçтерме.

Гена халĕ пĕчĕк-ха,
Пĕчĕк пулин, ӳсĕ-ха.
Ӳсĕ те ун чух вара
Тĕлĕнтерĕ пурсăра.

**Кăткăсем**

Кăткăсем, кăткăсем...
Пысăк тĕмĕ тунă.
Кил-çуртне тума вĕсем
Мĕн тери вăй хунă!
Килсе курăр, ачасем,
Пăхăр-ха, ĕçлеççĕ.
Халь те улăм пĕрчисем
Йышлăн сĕтĕреççĕ.
Малалла та каялла
Васкаса чупаççĕ.
Ак шыв урлă каçмалла —
Час кĕпер хураççĕ.
Кăткăсем, кăткăсем...
Пысăк тĕмĕ тунă.
Тăрăшса кунта вĕсем
Мĕн тери вăй хунă!

И. Малкай

**Ан вĕренĕр юнтарма**

Темĕн пулчĕ, тем çитмерĕ,
Тем тăвасшăн пирĕн Вера? —

Хучĕ çутă кашăкне,
Тăсрĕ пĕчĕк тутине.
Çавăнтах анне систерчĕ,
Кусĕпе пире пĕлтерчĕ:
Лартăрах вăл, лартăрах,
Хăйне хăй юнтартăрах.
Ак эпир апат çиетпĕр —
Пуçтаратпăр та илетпĕр.
Ларса юлтăр вăл пĕччен,
Кăмăлне тӳрлетиччен.

И. Малкай

**Сăмах вăййи**

Кастрюльте, плита çинче,
Тутлă çеç яшка вĕрет.
Урамра, кил умĕнче,
Манăн тус, Кампур, вĕрет.
— Сивĕ, — тет вăл, — çил вĕрет,
Шăнтăм эп, Кирук, хытах.
Ман валли эс чей вĕрет,
Ăшăнасчĕ хăвăртрах.

И. Малкай

**Ик чĕлхе вăл — ик тĕнче**

Килтисемшĕн эп Эльвира,
Верка теççĕ хăшĕсем.
Стройкăри пек «Майна! Вира!» —
Тăрăхлаççĕ теприсем.
Асатте ялне килсессĕн,
Хурланмашкăн кăмăл çук,
Урăхла мана чĕнеççĕ,
Эп пуриншĕн те ВЕРУК.
Эп чăваш пулса ӳсесшĕн
Вырăсла пĕлсессĕн те.
Чăвашла та вĕренесшĕн,

Ик чӗлхе вӑл — ик тӗнче!

И. Малкай

**Пулмасла ӳкерчӗксем**

Пӗчӗкҫӗ кӑна ҫӑрттан
Ярса тытнӑ Петӗре.
Шывалла мӗн пур вӑйран
Сӗтӗрет те сӗтӗрет.
Ак кур мӗнле тамаша —
Урампа пырать лаша!
Кур-ха, мӗн хӑтланнӑ:
Кавӗрле ҫине утланнӑ!

И. Малкай

**Кӑмпара**

Тавраран паян утатпӑр,
Васкамастпӑр хулана.
Ҫула май кӑмпа тататпӑр —
Кӗтӗмӗр те вӑрмана.
Мӗн тери пуян уҫланкӑ!
Тулнӑҫем тулать витре.
Хӗрлӗ кӑмпана куҫларӑм,
Шӗлепки мӗнле хитре!
Ман атте хытахтиркерӗ:
— Наркӑмӑш!.. Ӑна ан тат!
Вӑл шӑна кӑмпийӗ, — терӗ,
Пӑшие — аван апат.

И. Малкай

**Ҫӳпҫе**

Чаплӑран та чаплине,
Хаклӑран та хаклине
Хунӑ хӑйӗн ҫӳпҫине
Пирӗн ватӑ асанне.

Акӑ вӑл тухья, хушпу —
Тӑхӑнмашкӑн хатӗр пул!
Ҫутӑ кӗмӗллӗ тевет,
Шӳлкеме куҫа ҫиет.
Ҫамкаран ҫыхма масмак,
Вӗттӗн ташлама пушмак.
Икӗ аркӑллӑ кӗпе
Пурҫӑнпа тӗрленипе
Питӗ хӳхӗм курӑнать.
— Тӑхӑнса кӑтарт ӑна! —
Асанне туй тумӗпе
Ҫамрӑкланчӗ пӗтӗмпех,
Хӑйӗн ӑшӑ куллипе
Чӑннипех те Туйпике.
Пул эс сывлӑхлӑ куллен,
Ан чирле, ҫӳре хуллен
Эп ӳссе ҫитӗниччен,
Ман туйра савӑниччен!

И. Малкай

**Куккук**

— Куккук килнӗ, куртӑр-и?
— Куртӑмӑр.
— Ку-ку, ку-ку! тенине
Илтрӗр-и?
— Илтрӗмӗр.
Эпир ун чух вӑрманта
Пулнӑччӗ,
Хитре-хитре чечексем
Пухнӑччӗ.

Мӗтри Ваҫлейӗ

**Чӗкеҫ юрри**

Хура куҫлӑ,
Пӗчӗк пуҫлӑ,

Эреветлĕ те
Теветлĕ,
Шыва кĕтĕм те
Чӳхентĕм,
Пĕрре чăмрăм,
Пăчăнтăр-р!..
Çӳçсем пухрăм,
Иăва турăм
Пит илемлĕн те
Йĕркеллĕн.
Эреветлĕн те
Теветлĕн
Юр юрларăм,
Пăчăнтăр-р-р!..

В. Никифоров

**Ялта**

Эп каллех кăçал çулла
Пурăнма каяп яла:
Пулăшăп асаттене
Шăварма йăрансене.

В. Никифоров

**Çуралнă кун**

Хăйана килсем, Антун,
Ман паян — çуралнă кун.
Кил часрах йăмăкупа,
Эп хăналăп мăйăрпа.
Шăрăхра

Шăрăх тăнăран
Çĕр сывлать аран.
Кăшкăрать хăяр:
— Хăвăртрах шăвар!

В. Никифоров

**Мунчала**

Каян пулсан мунчана
Ан ман илме мунчала.
Мунчалапа ҫăвăнсан
Пулса тăрăн тап-таса.

В. Никифоров

**Велосипед**

Велосипед ҫине ларса
Хам ҫӳретĕп ыр курса.
Урасем кăна ыраҫҫĕ —
Педале тĕксе пыраҫҫĕ.

В. Никифоров

**Шăши**

Шăппăн макăрать шăши:
— Мĕнле пурăнмалла-ши?
Кушак та мана тытать,
Курак та мана йăтать,
Ҫĕлен те ҫăтса ярать —
Пуринчен те чун хăрать.

В. Никифоров

**Тумла**

Патлатса тумлать тумла,
Вăл калать мана: — Тумлан,
Хăвăртрах тух урама,
Шăнкăрч килнĕ урама!

В. Никифоров

**Калта**

Умра çĕрĕк тунката,

Ун çинче выртать калта.

Те сăхать вăл, те сăхмасть?

Тĕкĕнмесĕр чун чăтмасть.

В. Никифоров

**Çăван**

Çăвăн çăлкуç шывĕпе,
Кăпăкласа супăньпе —
Таса пулăн кантăк пек,
Хитре пулăн мăкăнь пек.

В. Никифоров

**Çăвăнмасть-ши?**

Шурă йытă пит таса,
Çăвăнать пуль тăрăшса.
Хура кушак хуп-хура,
Çăвăнмасть-ши вăл вара?

Л. Николаева

**Юр кĕлетке**

Йăваларăм, йăваларăм —

Юр кĕлетке купаларăм. Т

ыттартăм шăпăр аллине,

Кишĕр — сăмса вырăнне.

Пуç çине вара — витре.

Манăн тусăм пит хитре!

Тумламсем шутне шутлам

Пĕлĕт карчĕ тӳпене,

Пурте тарчĕç килсене.

Харсăрланчĕ аслати.

Хыççăн çиçĕм çиçет-и?

Пĕр тумлам, ик тумлам...

Тумламсем шутне шутлам.

Çиçӗм çиçрӗ ӑнсӑртран —
Эпӗ такӑнтӑм шутран.

Г. Орлов

**Сар кайӑк**

Садра, Паркра, Вӑрманта —
Кӑшт чӑтлӑхрах вырӑнта —
Хыт сыхласа катаран
Вӑл чӗнет çапла ялан:
— Ху та кур, кил-ха!
Ху та кур, кил-ха!
Эс курасшӑн çывӑхран —
Вӑл вӗçсе тарать санран,
Кӑштахран ак Инçетрен
Çав сассах тата илтен:
— Ху та кур, кил-ха!
Ху та кур, кил-ха!

Г. Орлов

**Чие кайӑкӗ**

Вӑхӑт тупсан, май пулсан
Эп сада кӗреп кӑна —
Асӑрхать мана, чунтан
Ятлама вӑл тытӑнать:
— Тин-тин-тин, — тет, — тин-тин-тин,
Килтӗн эсӗ тин-тин-тин!..
Пуринчен те иртерех
Эп тухап хӑш чух сада —
Мухтамасть вӑл пурпӗрех,
Темшӗн вӑл ятлать татах:
— Тин-тин-тин, — тет, — тин-тин-тин,
Килтӗн эсӗ тин-тин-тин!..

Ю. Петров

**Путене**

Каçхине е ир енне
Тухăр тулă пуссине,
Итлĕр путĕр-путенен
Янкăр уçă сассине.
Пĕт-пĕлтик, пĕт-пĕлтик!..
Шăнкăрав пек чĕтренет.
Авăтать çине-çинех
Йăпăр-йăпăр путене.
Пĕлтерет вăл çынсене
Тулă хӳхĕм пулнине.
Пĕт-пĕлтик, пĕт-пĕлтик!..
Хирĕпех халь илтĕнет.

Ю. Петров

**Уйăпсем**

Уйăпсем, уйăпсем!
Ма сивве юрататăр?
Юр ӳксен, Сивĕтсен,
Каялла таврăнатăр.
Пилешсем, палансем,
Катăркас çырлисем
Сирĕн тутлă апатăр.
Хĕрлĕ мăйлăскерсем,
Куçăма йăпататăр.
Уйăпсем, уйăпсем!
Ăшăран ма таратăр?
Хĕл иртсен,
Çур çитсен,
Çурçĕре ăсанатăр.

Ю. Петров

**Çырмари концерт**

Çырмара концерт пуçланнă,
Дирижерĕ ват шапа.
Улăхĕ, кӳлли, вăрманĕ
Янăрать çĕршер саспа.
Кăвва-кăвва, па-ка-как!
Тăр-тăр-тăр!.. Ак-ак-ак!.
Пулăсем пуçне кăларнă,
Шăп лараççĕ кайăксем,
Куянсем те тимлĕн ларнă —
Киленеççĕ итлесе.
Сарă тилĕ, сăрă кашкăр,
Шурă юс, мăран упа...
Пурте килнĕ итлемешкĕн,
Пурте ăшшăн ал çупать.
Кăвва-кăвва, па-ка-как!
Тăр-тăр-тăр!.. Ак-ак-ак!..

Ю. Петров

**Мучи тав тăвать**

Ват мучи утать аран
Туйипе таклаттарса.
Сетки йывăр пулнăран
Тăчĕ сывлăш çавăрса.
Таврăнать вăл лавккаран
Тĕрлĕ çимĕç туянса.
— Çула май йăтса парам! —
Тет Ванюк тăп чарăнса.
Ватă çыннăн куçĕсем
Кайрĕç ăшшăн çуталса:
— Пирĕн кӳршĕ ачисем
Вашават-çке чăнласах.
Çăрттан мыскари

Тытрĕç ик ача Сăртан
Темĕн пысăкăш çăрттан.
Касрĕç хырăмне... Мĕн мур?!
Унта тепĕр пулă пур:
Самăркка хитре партас.
«Ха, ăна ма пăрахас?
Лекнĕ-тĕр вăл тин кăна
Сĕмсĕр, çăткăн çăрттана.

Ку пулла та тăварлар,
Ăш-чикне йăлт тасатар», —
Шухăшларĕç ачасем —
Çамрăк, йăрă пулăçсем.
Йăл çиçет туссен кулли:
Тĕлĕнтермĕш куç тулли!
Çав партас-мĕн тетĕр-и?
Çăтнă-мĕн ыраш пăтри.
Пулса тăчĕ çăрттанран
Виçĕ пулă ... ăнсăртран.

Ю. Петров

**Хĕллехи илем**

Аттепе пĕрле çӳретпĕр
Эпир вăрманта,
Пĕчĕк чăрăш касас тетпĕр
Ёлкăлăх кунта.
Садикра пире кĕтеççĕ
Çамрăк тусăмсем.
«Капăр ёлка кирлĕ», — теççĕ
Тахçанах вĕсем.
Хĕллехи вăрман илемĕ
Чун ытарайми.
Шурă тĕсĕ ун виçевлĕ,
Куç ытарайми.
Шурă кĕрĕкпе чупаççĕ
Куй-куй куянсем.
Хура тум уртса лараççĕ

Вată юмансем.
Çыхса янă шурă тутăр
Вată тунката.
Çамрăкланнă пек туять-тĕр
Халь вăл, тупата.
Шурă шупăрне юсать ав хурăн,
Манăн аппа пек.
Çакăн евĕр илем урăх
Çук пуль, çук пуль тек.

Ю. Петров
**Ăçта каян, кăсăя?**

— Чи-чи! кăсăя,
Ăçта каян, кăсăя?

— Улăм, мамăк, тĕк пухма,
Кил-çуртăма юсама.

— Чи-чи! кăсăя,
Ăçта каян, кăсăя?

— Хурт-кăпшанкă пуçтарма,
Чĕпсене тăрантарма.

— Чи-чи! кăсăя,
Ăçта каян, кăсăя?

— Сывлăшра йăр-яр вĕçме,
Чĕппĕмсене вĕрентме.

— Чи-чи! кăсăя,
Ăçта каян, кăсăя?

— Сад пахчи хураллама,
Ачасене пулăшма.

Ю. Петров
**Карусель**

Тем сарлакăш кустăрма,
Ун тавра вуншар сăпка
Тытăнсассăн çаврăнма
Сывлăшра силлет, лăпкать.

Кайăк евĕр хăвăртах
Ухăнатăн çӳлелле.
Туйăнать умра йăлтах
Юмахла та тĕлĕкле.

Йывăç-курăк, пĕлĕт, çĕр
Тĕрлĕ тĕслĕ вылянса
Вĕлтлетеççĕ вĕçĕмсĕр
Асамат пек карăнса.

Пĕтĕм сывлăш пӳлĕнет,
Уçлăхри пек темелле.
Пур ача та киленет
Çаврăнса вĕçнипеле.

Н. Прокопьев
**Кăркка**

Кăркка тăснă та мăйне
Каллĕ-маллĕ чупкалать.
Ача сачĕн картишне
Вăл кĕресшĕн кăрлатать.

— Ан тивсемĕр, ачасем,
Унта манăн чĕппĕмсем...

Маруçпа Таруç, Иван
Сар сăмсаллă чĕпсене
Ачашларĕç кăмăлтан,
Ячĕç амăшĕ патне:

— Кунĕпе те çĕрĕпе
Пĕрле пулăр аннĕрпе!

Я. Рогачев

**Чĕпсем**

Чăмăрккасем, начар çиетĕр.
Чăмăрккасем, мĕскер кĕтетĕр?
— Э?, Куля тусăм, сарă тулă
Çĕрулминчен нумай тутлă.

Я. Рогачев
**Асамат кĕперĕ**

Çаран çинче ăна эп куртăм,
Ун еннелле васкавлăн утрăм.
Эп çитрĕм те çаран çине -
Чупрĕ кĕпер пĕве патне.
Кĕтĕм шыва ун хыçĕнчен,
Тытасшăн пултăм ункинчен.
Пăхатăп — вăл вăрман çинче.
Чупасчĕ ман — вăрман инçе.

Б. Романов
**Хӗвел**

— Хӗвел, пăх,
Хӗвел, пăх!
Çупа çăкăр çитереп! —
Хӗвел пăхрӗ те çуталчӗ,
Самантрах куçран çухалчӗ.

— Хӗвел, пăх!
Хӗвел, пăх!
Çупа çăкăр çитереп! —
Хӗвел ăшшăн шурӗ тухрӗ,
Тепӗр хут мана тав туре.

Б. Романов
**Пӗчӗкки**

Ушкăн кăвакал чӗппи
Симӗс курăк чӗпӗтет.
Улинеçӗм хӗпӗртет:
— Пӗчӗкки, — тет, — пӗчӗкки!..

Шурă сурăх путекки
Тăпăрт-тăпăрт сиккелет.
Улинеçӗм хӗпӗртет:
— Пӗчӗкки, — тет, — пӗчӗкки!..

Пур çӗрте те хай пекки
Курăнса кайсан куçне
Хӗпӗртет те Улине:
— Пӗчӗкки, — тет, — пӗчӗкки!..

Б. Романов

**Курак**

Хурама çинче курак
Кăшкăрать: — Хурах! Хурах!
Вăл пăлханнă тăруках.
Мӗн-ши пулнă курака?
Унăн хырăм выçнă пуль.
Юхтарать-и, тен, куççуль?
Выçнă тăк — ахаль ан лар,
Хурт-кăпшанкă эс пуçтар.

Б. Романов

**Ашшĕ-амăш, чĕпписем**

Аслă ял çывăхĕнче —
Мăн Çавал,
Мăн Çавал çыранĕнче —
Шур хăва,
Шур хăва чăтлăхĕнче —
Йăвасем,
Йăвасен ытамĕнче —
Чĕпĕсем.
Ăшăтаççĕ чĕпсене
Амăшсем,
Ачашлаççĕ вĕсене
Ашшĕсем,
Çитерееççĕ,
Ӳстереççĕ,
Юррине итлеттереççĕ,
Вăхăт çиттĕр — вĕçтереççĕ.

Б. Романов

**Тăри юрри**

Çур тырри куç умĕнче,
Çуллахи кун янкăрах.
Тӳпере, пуç тĕлĕнче,
Çакнă пек йĕс шăнкăрав.
Тăр-тăр-тăр!.. Тăр-тăрах!..
Чарăнми вăл тăрлатать.
Тырă пиçтĕр хăвăртрах
Тенĕ евĕр туйăнать.

А. Савельев-Сас

**Мана автан йыхăрать**

Автан тус ирех тăрать,

Вара мана канăç çук.

Тапхăр-тапхăр кăшкăрать:

— Кил кар-ти-не тух, Ки-ру-ук!

Чăх мана кĕтме хушать

— Илемлĕ эс, самăр та,

Туса пар-ха çăмарта.

Вара кĕрпе парап вĕт...

— Кĕт-ха кăштах! Кĕт-кĕт-кĕт!

А. Савельев-Сас

**Хураçкапа калаçни**

— Хура-хура Хураçкам,

Çурту ытла хитре сан.

Кам тунă-ха ăна? Кам?

— Хам! Хам! Хам!

— Туп-туллиех валашка.

Çав апата, Хураçка,

Кам çинĕ-ха, каласам?

— Хам! Хам! Хам!

— Кашни кунах кăнтăрла

Выртатăн эс сăнчăрта.

Кам кăкарчĕ, Хураçкам?

— Хам! Хам! Хам!

— Хăш чух эсĕ, Хураçка,

Туртса çӳрен çунашка.

Кам кӳлет-ши сана? Кам?

— Хам! Хам! Хам!

А. Савельев-Сас

**Тĕлĕнтермĕш Микулай**

Тĕлĕнтермĕш! Ай-ай-ай!

Йытă кӳлнĕ Микулай...

Ыткăнаççĕ ик Улай,

Çуйхашаççĕ лăй та лай!

Мелсĕр ларнă Микулай
Ӳкрĕ юлчĕ, ай-ай-ай!

А. Савельев-Сас
**Асанне çип çăмхалать**

Кунран-кунах хĕл енне
Шур юр çĕре чăпарлать.
Çакна кура асанне
Алсиш çыхма сип арлать.

Йĕки тулать асаннен,
Вара çипне çăмхалать.
Тулли йĕке майĕпен
Урай тарах кускалать.

Кушак çакна курнипе
Кĕçех ĕçе пикенет.
Ик пĕчĕк çеç çурипе
Тытать тулли йĕкене.

— Маттур эс, — тет асанне,
Ырлать кушак аçине, —
Чăлха çыхса парас, — тет, —
Сивĕ пулмĕ урине.

А. Савельев-Сас
**Астутарчĕ**

Шурă сурăх пăранларĕ.
Шур путек çӳрет сиксе.
Кĕркури унпа вылярĕ
Тĕкĕшмешкĕн вĕрентсе.

Вăхăт иртрĕ сисĕнмесĕр,
Пысăкланчĕ шур така.
Çамкинче ун шушкă евĕр
Икĕ пысăк мăйрака.

Пĕр кунне çак так! тутарчĕ
Хыçалтан Кĕркурине.
Ахăртнех, вăл астутарчĕ
Кам тĕртме вĕрентнине.

А. Савельев-Сас
**Ăсан**

Çил вĕрмест.  Вăрман лăпках.
Юр çăвать лапка-лапка.
— Эп капла кунтах ларсан, —
Тет юман çинчи ăсан, —

Туххӑм юлӑп юр айне,
Пытанас-ха кӗрт ӑшне...
Кунта лайӑх, хӳтӗ те,
Юр лекмест пӗр пӗрчӗ те.

А. Савельев-Сас

**Эрне**

Итле, тӑнла, Кӗтерне:
Тунти кун пуҫлать эрне.
Эс тӑнла, ытла ан кул,
Ун хыҫҫӑн — ытлари кун.
Юн кун юрӑ пуҫлатпӑр,
Кӗҫнерни кун вӗҫлетпӗр,
Эрне кун хыт ӗҫлӗпр,
Шӑмат кун ҫитсен вара
Ҫӑвӑнӑпӑр мунчара.
Вырсарни кун, Кӗтерне,
Вӗҫленет шӑп пӗр эрне.
Пӗр эрнере — ҫичӗ кун,
Ҫиччӗшӗ те — лайӑх кун.

Л. Сарине

**Тутлӑ яшка**

Питӗ вӑрттӑн пӗлтерсе
Пӑшӑлтатрӑм аттене:
— Тутлӑ яшка пӗҫерсе
Ҫитерем-ха аннене.
Ятӑм сахалрах тӑвар,
Ятӑм сахӑрпа тӑвар,
Сыпса пӑхрӑм пӗр ҫӑвар.
— Яшка питех тутлӑ мар.
Ах, аннем, мана каҫар.
Атте нимӗн те чӗнмест,
Анне яшкана ҫимест,
Пурпӗр мана ачашлать,
Ӑшӑ сӑмахсем калать:

— Пĕчĕк ывăлăм Ванюш,

Куншăнах пуçна ан ус.

Малашне тăвар кăна

Эс ярсамччĕ яшкана.

Р. Сарпи
**Уйăх**

Пĕччен уйăх тӳпере
Йăлăхнă çӳре-çӳре.
Манпа туслăн выляма
Шутламан-и вăл анма?

Мăйраки ун, вăрăмран,
Кур, çакланнă туратран.
Йывăç çине хăпарам,
Уйăха эп хăтарам.

Р. Сарпи
**Пĕлĕтсем — шур путексем**

Шурă-шурă пĕлĕтсем —
Шурă-шурă путексем
Пухăннă вăрман çине
Çулçă чăмлама-çиме.
Кĕтӳçĕ — шух сил ачи,
Чеескер... кăшт ырнă-ши?
Выртнă та кăнч хутланса
Путексем çинчен манса
Хул туртать тем айĕнче.
Чăпăркки ав айккинче.

Р. Сарпи
**Кам-ши эпĕ?**

Анне мана: «Чĕппĕм», — тет.
Атте: «Ашкăнчăк эс», — тет.
Асаннеçĕм: «Ĕнчĕ», — тет.
Аппа: «Хура курак», — тет.
Шăллăм виртлет: «Упăте!»
Инке: «Путенеçĕм», — тет.
Кӳршĕри Терен тете:
«Тылла пуçри тăрна», — тет.
Эп тăратăп аптраса,
Кам-ши эпĕ чăнласа?

Р. Сарпи
**Ӳкерчĕк**

Çĕнĕ пӳрт ӳкертĕм,

Турӑм мӑрйине.
Тухрӗ сар хӗвел те
Янкӑр тӳпене.

Пӗлӗтсем шап-шурӑ,
Пысӑк мӗлкесем...
Хумлӑ-хумлӑ тырӑ —
Анлӑ уйӗсем.

Яштака шур хурӑн
Лартрӑм ҫӑл умне.
Сад ӳкерсе хутӑм
Чӳрече умне.

Татӑк хут анчахчӗ
Тин ҫеҫ ман умра.
Пурнӑҫ сӑн-сӑпачӗ
Чӗрӗлчӗ унра.

Р. Сарпи

**Ейӳ сарӑлсан**

Ҫыр хӗрринче ӳсет йӑмра —
Хӑй чӗркуҫҫи таран шывра. —
Тух хӑвӑртрах, йӑмра, шывран,
Шӑнса эс чирлӗн ҫаруран.
Йӑмра пӑхмасть те каялла.
Тек тайӑлать вӑл шывалла.
Юлташӗпе вӑл ух! та ух!
Кӳлленчӗк урлӑ сикнӗ чух
Шуса ӳксе лапра ҫине
Варланӑ пулнӑ кӗпине,
Ак халӗ амӑш куриччен
Васкать, чӳхет ӑна темччен.

Р. Сарпи

**Ҫырлара**

Аслӑ вӑрман уҫрӗ
Ешӗл каррине.
Ман сукмакӑм чупрӗ
Чӑтлӑх варрине.

Çут хěвелě шелсěр
Ăшшине тăкать.
Сулхăн тӳсеймесěр
Тěм хыçне тарать.
Вăрман имě-симě —
Хěп-хěрлě çырла.
Тутлă, ырă çимěç
Пирěн тавралла.
Ăшă, ырă куншăн
Савăнать чěре.
Кунтăк хыççăн кунтăк
Тулчě ěшнере.

Р. Сарпи

**Шурă хурлăхан**

Те шăрçа ку, те пăрçа:
Савăнтарать пахчаçа.
Хěрлě мар, хура та мар,
Симěс мар вăл, сарă мар.
Ку вăл — шурă хурлăхан —
Витěр курăнать пăхсан.
Çип çине тирсе тухсан
Мăй çыххи тума аван.
Шурă хурлăхан ӳсет
Пирěн пахчара кăна.
Камăн çиесси килет —
Килсе курăр хăнана.

Р. Сарпи

**Кулě**

Ярăм-ярăм сапрě

Хӗвел ҫут хӗмне.
Кӳлӗ шывӗ ҫакрӗ
Кӗмӗл теветне.

Лӑпкӑ ҫил хускатрӗ
Вӗтӗ хумсене.
Тевет ҫинчен татрӗ
Ҫутӑ тенкине.

Вӗлт те вӗлт ҫухалчӗҫ
Татнӑ тенкисем...
Ак каллех ҫуталчӗҫ —
Шыв ҫинчех вӗсем.

Р. Сарпи

**Чӗмсӗр шыв**

Пӳрт ҫинче пит усӑн, сыввӑн
Хавасланчӗ ҫумӑр шывӗ.
Вӑл хӑех каларӗ шӑпӑр,
Пӗр ташларӗ тӑпӑр-тӑпӑр!
Ҫӗр ҫине кӗҫ сиксе анчӗ —
Сиксе анчӗ те шӑпланчӗ.
Пухӑнчӗ кӳлленчӗке,
Ӗнтӗ юрламасть текех.
«Эс кама капла кӳрентӗн,
Мӗн пирки халь чӗмсӗрлентӗн?»
«Лекрӗм мар-и тыткӑна...» —
Терӗ шӑппӑн вӑл мана.
Тытрӑм пӗчӗк кӗреҫе,
Тытӑнтӑм хӗрсех ӗҫе.
Уҫрӑм эпӗ анлӑ ҫул —
Шыв ал сулчӗ: «Чипер юл!
Тавтапуҫ! Эс ҫул уҫса
Питӗ пулӑшрӑн мана».
Шӑнкӑр-шӑнкӑр юрласа
Шывваскарӗ ҫырмана.

Р. Сарпи

**Ташлать Илемпи**

Тулта сивӗ ҫил каш кашлать.
Пӳртре Илемпи таш ташлать.
Пăхать кантăкран сивӗ ҫил,
Пăхать-тĕлĕнет сивӗ ҫил:
Ташлать Илемпи, ташлать,
Шăвать вăл, ишет акăшла.
Хулне вылятать кĕвĕ май,
Пуҫне вĕлт! ухать шунă май.
Алне Илемпи вăшт! сулать,
Ташлана май йăл-йăл кулать
Е вырăнтах вĕл! ҫаврăнать,
Сиксе тăпăрт-тăпăрт тăвать.
Ташлать, Илемпи ташлать:
Сăмси те, ури те ташлать,
Ҫанни те, арки те ташлать...
Пăхать, чăтаймасть сивӗ ҫил.
Пуҫлать ташлама шухă ҫил.
Хăй шăпăр калать, хăй ташлать,
Ташлана май каш-каш кашлать.
Тулта сивӗ ҫил каш кашлать,
Пӳртре Илемпи таш ташлать.
...Ташлать сивӗ ҫил, ташлать...
Халтан кайрĕ, хаш! хашлатать,
Пуҫне усрĕ, сулчĕ алне,
Канма выртрĕ кив сак айне...

Ю. Сементер
**Аслати**

Тӳпене сăнать ача:
Хыврĕҫ пĕлĕтрен мачча.
Хыврĕҫ васкасах. Вара
Ĕҫ пуҫланчĕ маччара.

Йăлтăр-йăлтăр

Йӑлтӑртик!
Хӑнтӑр-хӑнтӑр,
Хӑнтӑртик!
— Мӗн тӑваççӗ
Пиччесем?
— Кустараççӗ
Пичкесем,
Шыв кӳреççӗ.
— Мӗн тума?
— Вӑйлӑ çумӑр çутарма.

Ю. Сементер
**Хӗвел çаврӑнӑшсем**

Çавра пуçӗсене усса
Ирччен канассӑн çывӑраççӗ,
Хӗвел тухсассӑн пит çуса
Сап-сар пуçӗсене тураççӗ.

Кун каçипе çӳл тӳпене
Куç сиктерми пӑхса лараççӗ,
Хӗвел пулма ӗмӗтленен
Хӗр ачасем пек туйӑнаççӗ.

Ю. Сементер

**Тиха**

Сакӑлта та чаккама,

Йӑлтӑркка, яка,

Юратать ачашланма

Уйӑхри тиха.

Кунсерен ӗçе тухать

Амӑшӗпеле.

Е кая тӑрса юлать,

Е иртет каллех.

Çӑмӑл пултӑр кӑшт тесе

Юнашар утать.

Амӑшӗ çавна сиссе

Çӑмӑлрах туртать.

Ю. Сементер

**Кӗнеке**

Кӗнеке!

Эс — пире вĕрентекен,
Пысăк ăс парнелекен,
Ĕçлемешкĕн чĕнекен,
Кĕнеке!

Кĕнеке!
Эс — пире вăй кӳрекен,
Çĕнтермешкĕн пиллекен,
Çут малашлăх сĕнекен,
Кĕнеке!

Кĕнеке!
Эс — пире ӳстерекен,
Инçете вĕçтерекен,
Ĕмĕте çитерекен,
Кĕнеке!

М. Сениэль

**Кĕтерне**

— Каç пулттипе, Кĕркури,
Атя ĕне çитерме.
— Пырăп, — терĕ Кĕтерне.
Пытăр эппин. Пытăр-и?
Ытти хĕрачасем пек
Пирĕнтен вăл ютшăнмасть.
Хамăрла вăл пĕтĕмпех —
Курнăçланмасть, юнтармасть.
Ашшĕпе те мухтанмасть,
Амăшпе те мухтанмасть.
Юлашки чĕл çăкăрне
Çурмалла тума хавас.
Атя ĕне çитерме,
Кĕл улмийĕ пĕçерме,
Савăк юрă итлеме.
Эх, юрлать те Кĕтерне!

М. Сениэль

**Пыл хурчӗсем**

Пахчара хурт сӗрлет.
Мӗкӗте тӗлӗрет.
Çывăрать çакăнта
Кашни кун сулхăнта.
Ах... Мӗскер? Мӗкӗте
Çухăрса ячӗ те
Йăпăр-япăр тарать
Урама пахчаран.
Çапкаланчӗ пӗрех,
Кайрӗ ӳкрӗ çӗре,
Макăрать, çухăрать:
— Ай-ай-ай!
Хурт сăхать! —
Сӗр сӗрлеççӗ хуртсем
Кахала йӗплесе.
«Пӗрехмай çывăран,
Ӗçлемесӗр пурнан.
Пахчара тек ан пул,
Сăрă хурт!» — теççӗ пуль.

М. Сениэль

**Çул çинче**

*Тӳнтерле сăвă*

Моторта вăрманăн
Сасси илтӗнет.
Мотоцикл ларнă
Кӗркури çине.
Кӗркурийӗ — çӗнӗ,
Çил пек ыткăнать.
Мотоцикл темӗн
Чăл-чал пăхкалать.
Куçӗсем ак тухрӗç

Пĕр кĕпер умне.
Кĕркури пуç ухрĕ
Тур лаша енне.
Тилхепийĕ тытнă
Сăрнай Ванине.
Сăрнай Вани хыттăн
Текех кĕçенет.

М. Сениэль

**Икĕ селĕп**

Икĕ селĕп — ик шăхличĕ —
Тупнă тем савăнмалли.
Пусмапа пĕри хăпарнă,
Хăвăл ăшĕнче алли.
Эх, пуплеççĕ икĕ тус:
— Михаха теп, Михаха,
Çеçи чĕппи иçе па-ха.
— Çеçи чĕппи çаха-ха...

Н. Силпи

**Марине**

Шăпчăк тейĕн Марине —
Ирхине ирех тăрать.
Пĕчĕкçĕ чĕпĕсене
Вăрттăн чăпăрт! чуптăвать.
— Çирĕп ӳс! Хăвăрт ӳс! —
Якатать тĕкĕсене.

Чĕкеç тейĕн Марине —
Питĕ калаçма ăста.
Пĕчĕкçĕ чĕпĕсене
Йыхăрать вăл апата:
— Чип-чип-чип! Чип-чип-чип!
Килĕрсемĕр ман пата.

Шăнкăрч тейĕн Марине —
Питĕ ырă, тарават.
Çитерет вăл вĕсене
Тутлă вир кĕрпи — апат.
— Пысăк пул! Тутă пул! —
Хăналать тусĕсене.

Н. Силпи

**Илем**

Янкăр пĕлĕт айĕнче
Сар хĕвел сапать шевле.
Çавăнпа та çут тĕнче
Хӳхĕм те чечен хĕлле.
Таврара сĕм çĕрлеччен
Янăраççĕ сасăсем.
Вăрманта юр айĕнчен
Пуç çĕклеççĕ чечексем.

Н. Силпи

**Хĕл çывхарать**

Таврана халь ыйхă пусрĕ,
Тĕлĕреççĕ йывăçсем.
Шурă хурăн пуçне усрĕ —
Тек юрламĕç шăпчăксем.

Шухă сил тытса ласкарĕ,
Хĕрхенмерĕ хурăна.
Çăкасем патне васкарĕ —
Чарма çук халь тек ăна.

Ир енне çĕркаç тăм ӳкрĕ,
Ĕшнери çут сак сине.
Шăрчăк туе та шанса кӳтрĕ,
Сисрĕ хĕл çывхарнине.

Н. Симунов

**Пукане**

Пĕчĕк тусăм, пукане,

Ма ӳкертӗн пуканне?
Ăçта хутăн урине
Пӗчӗк упа çуринне?
Ма тиркерӗн апатне:
Тутанман та салатне.
Ӳпӗнтернӗ чашăкне?
Хуçнă мар-и кашăкне?!
Ах, тирпейсӗр, ах, наян,
Мӗн хăтланнă эс паян?
Малашне сана ялан
Ертсе çӳрӗп хампалан.

Н. Симунов
**Сивӗ**

Урамра шап-шурă, сивӗ
Чӗпӗтет пите-куçа.
Пар айне пытанчӗ шывӗ,
Тинех тупрӗ канăçа.

Хӗрхенсе пăхса тăратăп
Урамри йыт çурине.
Çăматта тухса паратăп,
Тек ан шăнттăр урине.

А. Смолин

**Пулăра**

Ăшă, тараватлă
Янкăр тăрă ир.
Пулăра ларатпăр
Юлташпа эпир.
Шывӗ çутă-çутă,
Илӗртӗ таçтан.
Тен, çакланӗ çуйăн,
Лекмӗ-ши çăрттан?
Тем, путмасть-ха путăш,
Пушă мăн витре.
Чăтăмлăхăм, пулăш,
Кулă, çиç питре.

Л. Смолина
**Ту-ту-тут**

Тӗрлӗ тӗслӗ парăсран

Эп ăсталăп пăрахут.
Çырана шуса пырсан
Вăл сас паре: ту-ту-тут!

Л. Смолина
**Нăрик-нăрик**

Самăркка сысна çурин
Пит илемлĕ-çке юрри:
— Нăр-нăрик, — тет, — нăр-нăрик,
Пар апат мана, Юрик.

Л. Смолина
**Çумăр хыççăн**

Çумăр хыççăн хур аçи —
Пирĕн урам хуралçи —
Çунаттипе çат çапрĕ,
Çумăр шывне вĕлт сапрĕ.

Л. Смолина
**Пукане**

Ман атте тетте туянчĕ —
Кăвак куçлă пукане.
Лавккарах вăл йĕрсе ячĕ,
Уççăн кăшкăрчĕ: «Анне!»

Л. Смолина
**Юр пĕрчи**

Тĕлĕрет уйра калча
Витĕнсе шап-шур юрпа.
Ешĕлскер шăнмасть пачах
Кăпăшка кăна тумпа.

Шăнас çук-ха хурăнсем —
Шурă шупăрлă вĕсем.
Сивĕ-çке юр пĕрчине,
Çав тери черченскере.

Л. Смолина
**Сăпка юрри**

Канлĕ каç килет иккен
Çăлтăрсем çутса.
Çывăр, пĕчĕк чиперккем,
Çывăр лăпланса.

Çывăраççĕ çырмасем.
Ыйхăра — вăрман.
Тĕлĕреççĕ тирексем...

Çывăр, чунăм, кан.

Куçне хупрĕ майĕпен
Пукане пике.
Анаслаççĕ теттесем,
Çывăрах, пепкем.

Ыйха кайрĕ сар автан.
Ярăнсам, сăпка.
Çывăр эс те, маттурлан,
Çывăр, чĕппĕм, кан.

П. Çăлкуç
**Ашакпа Аркаш**

Урампа утать ашак,
Ун çинче ларать Аркаш,
Тапса сикрĕ те ашакĕ,
Ӳксе юлчĕ-çке Аркашĕ.

П. Çăлкуç
**Хурăн**

Хурăн пĕкĕ евĕр авнă туратне,
Те лаша кӳлсе урамалла чупасшăн,
Çеремре вылян ачасене
Катаччи паян ярăнтарасшăн?

Кайĕччĕ те... ун чĕрçи çине
Тахăш пурттине лартса хăварнă.
Шурă хурăн сивĕ çĕр питне
Çĕрĕпе куççулĕпе шăварнă.

П. Çăлкуç
**Кăткă**

Туртать пĕр кăткă улăм пĕрчине,
Мĕн пур вăйне пухсах хăй сĕтĕрет.
Анать айлăмалла,
Çитет вăл сăрт çине,
Канать те малаллах мĕкĕлтетет.
Çак пĕчĕк улăм пĕрчине пула
Ыраттарать те пуле çурăмне.
Çапах мăнаçлăн, танлăн пăхкалать:
Вал, калăн, тупнă пысăк пĕрене.

П. Çăлкуç

**Çумăр умĕн**

Килчĕç çитрĕç пĕлĕтсем,
Килчĕç кĕрлесе.
Пĕчĕк çеç хур чĕпписем
Тарчĕç шимплетсе.
Кĕмсĕр-кĕмсĕр тутарса
Илчĕ аслати.
Килне тарчĕ хăраса
Пирĕн кас ачи.
Ал армань пек çаврăнать
Çилĕ таврара.
Хӳлтĕр-хӳлтĕр тутарать —
Ку вăл çумăра.

П. Çăлкуç

**Хама çеç, тен, хăналас?..**

Тупрăм виçĕ çĕр çырли.
Чухлăр: татрăм кам валли?
Пĕрне парас Кирлене,
Чунтан савнă пиччене.
Теприне — Кулинене,
Кӳршĕ ял хĕр ачине.
Виççĕмĕшне — Марука,
Хамăн пĕчĕк йăмăка.
Чим-ха, кун пек пайласан
Кӳренмест-ши шăллăм ман?
Вăрçмĕ-ши мана атте
Тата ватă асатте?
Урăхла, тен, шухăшлас —
Хама кăна хăналас...

П. Çăлкуç

**Буратино йыхравĕ**

Кам пӗлмест, эп — Буратино!
Калăр, эп чӗр чун-и, çын-и?
Пӗлмесен те — ним те мар.
Туслă çеç ялан пулар.
Эп — асамлă пултаруçă,
Аллăмра ман ылтăн уçă.
Кăшт кăна ăна пăрар —
Кермен алăкне уçар.
Юмахри пек тӗнчере
Валеçем телей сире.
Чи-чи çутă телейне,
Пуринчен пысăккине,
Кам илесшӗн — ал çӗклетӗр
Ташласа вăл тӗлӗнтертӗр,
Савăнса юрлатăр уççăн,
Çавна çеç чыс кӳрӗ уçă.
Кам кӗресшӗн чи малтан,
Ыр сунатăп кăмăлтан.

П. Çăлкуç

**Асанне е кукамай?**

Кайрăм асанне патне
Пӗринче эп хăнана.
— Асанне, — теп, — асанне,
Пӗрре вăрç-ха Динăна.
Мӗншӗн вăл сана ялан
Кукамай тесе чӗнет?
Çак мана мӗн пур чунтан
Кулленех кӳрентерет.
— Çук, — тет, — Зина, эсӗ ху
Йăнăшатăн яланах.
Кукамай, тархасшăн, хуш,
Тӗрӗс чӗнтӗр вăл сана.
Асанне йăл кулнă май:
— Шутлăр, — терӗ, — иксӗрех...
Асанне е кукамай?

Хăшĕ пулĕ тĕрĕсрех?

П. Çăлкуç

**Чуччу**

Ик йăмра çине ирех
Хутăм эп кашта.
Каштаран çинçе вĕрен
Çыхрăм пит ăста.
Пĕчченех чуччу паян
Ăсталарăм мар-и!
Йăл кулса пур кăмăлтан
Ярăнма пуçларăм.
Йăмăка та кăштахран
Эпĕ савăнтарăп —
Ытарми чуччупалан
Хыттăн ярăнтарăп.

В. Тарават

**Çурмалла**

Пур ĕçе тума хавас вăл.
Пит маттур çак Микула.
Урай çунă хăпăл-хапăл —
Пĕтермен, чупать тула.
Кишĕр çумлама пуçланă,
Çитеймен Микуль вĕçне —
Вăл викторие куçланă.
— Çумлĕ кишĕрне анне.
Хăярсем, кур, шыв ĕçесшĕн,
Çăл патне Микуль чупать.
— Витрисем-çке йывăр темшĕн, —
Сăлтавне Микуль тупать.
Вăл пурне те пулăшать,
Анчах хăвăрт ывăнать.
Ĕçленипе çуррине
«Çурмалла» теç халь хăйне.

В. Тарават

**Вӑрман парни**

Пур уçланкӑ вӑрманта,
Юмахри пекех унта.
Çемçе кӑмӑл, ырӑ чун
Парнелет телейлӗ кун.
Кӑмпасем лартса вӑл тухнӑ,
Çырласем тем чухлӗ пухнӑ:
Хурлӑхан, хӑмла çырли,
Чечексем — тӗрли-тӗрли...
Сенкер куçлӑ кӑ̆лӗсем —
Вӑй выляççӗ пулӑсем.
Эп туратсене хуçмастӑп,
Эп чечексене татмастӑп.
Пӑтратмастӑп кӳллине,
Упрап вӑрман илемне.

В. Тарават

**Перчетке**

Пӳрнисем аннен васкаççӗ,
Çутӑ йӗпписем выляççӗ.
Çичӗ тӗслӗ çипписем:
Саррисем те хӗрлисем,
Шуррисем, симӗссисем,
Пӗлӗт тӗслӗ кӑвакки...
Йӗрлӗ-йӗрлӗ перчетки.
Мӗнешкел илемлӗ тӗрӗ —
Чӑн-чӑн асамат кӗперӗ!

В. Тарават

**Ах, мунчи**

Эп выртап лапка çинче,
Милӗк атте аллинче,
Вӑл мана хӗрсех çапать:
Çат-çат-çат! Çат-çат-çат!

Атте калать такмакне,
Вылянтарать милĕкне:
— Ятăм чир-чĕрне хуса,
Ӳсĕн улăп пек пулса.

В. Тарават
**Çăвару айăплă**

Эп кунĕпех çырла пуçтартам,
Тăп-тăпăл кунтăка тултартăм.
Халь каймалла киле. Тĕнче! —
Пĕр ывăç кунтăк тĕпĕнче.

Йĕретĕп эп. Юлташ шӳтлет:
- Сан çăвару нумай ĕçлет.

Н. Теветкел
**Йĕлтĕрпе вăрмана**

Тĕлĕрет лăпкă хир,
Шавламасть сĕм вăрман.
Çакăнта паян ир
Пит çӳрес килчĕ ман.
Мăшăр йĕлтĕр тупса
Сыртăм эп урана.
Хире куртăм тухса,
Çитрĕм сĕм вăрмана.
Хĕвел питне çăвать
Сас кайрĕ пăшăл-пăшăл
Сĕм-сĕм вăрмансенче.
Чӳхенчĕ ылтăн кăшăл
Ирхи Кĕтне çинче.
Çук, кăшăл мар — хĕвел-мĕн
Шывра питне çăвать.
Вара татах илемлĕн
Мала вăл çул хурать.

Н. Теветкел
**Уйăх кимми**

Çанталăк ырнă — такăнать,

Пĕр вĕçĕм çулçă тăкăнать.
Кӳлле те кĕчĕ çĕн илем,
Çав илеме каçпа илем.
Хумсем çинче карас пекех
Сике-сике вĕçмесĕрех
Сар уйăх кӳлĕре ишет,
Пăхса тăма та питĕ шеп.
Анасчĕ кӳлĕ хĕррине,
Тытасчĕ уйăх киммине.
Ишсе çӳресчĕ каниччен
Тап-тарăн кӳлĕ варринче.
Кĕтмен çĕртен сĕм пĕлĕтпе
Хупланчĕ кăн-кăвак тӳпе.
Çухалчĕ киме те куçран —
Те путрĕ вăл хуçимçукран?
Сĕм пĕлĕт кайрĕ те иртсе,
Ишет вăл çплипех сиксе.

Н. Теветкел

**Март**

Çурхи çил вĕрет
Ăшă кăнтăртан.
Сар хĕвел кĕрет
Уçă кантăкран.
Хĕвелпе вылять
Пĕчĕк Марине.
Тутинче кулать
Çутă çуркунне.

Н. Теветкел

**Хуралчĕ тăвайкки**

Хĕвел хĕртет куллен,
Хуралчĕ тăвайкки.
Ӳпне выртать иккен
Кирукăн çунашки.

Тăрать вăл тунсăхпа
Тăвайккине пăхса.

Текех çунашкапа
Анаймăн ярăнса.

Н. Теветкел
**Светофор**

Сан умра — асфальтлă çул,
Сан умра кĕрлет хула.
Çавăнпа эс сыхă пул,
Пăхкала умри çула.
Эх, чупаççĕ вăр! та вар!
Машинсем унта-кунта.
Ак виç куçлă светофор
Куç хĕсет сана:
— Тăхта!..
— Эй, ан каç çул урлă! — тет
Хĕрлĕ куç. — Инкек çеç тупăн!
— Тимлĕ пул! — тесе хистет
Сарă куçĕ те. — Çул хупă! —
Йăл! çиçет те симĕс куç:
— Уттарах! — тет. — Тавтапуç!

В. Тимаков
**Ăнланусăр кăвакал**

Юхтарать пĕр касă çумăр
Питĕ пысăк каткаран.
«Самантрах исленĕ тумăр», —
Тет пире ыр кăмăлтан.
Кашкăртан хăранă евĕр
Вирхĕнетпĕр хӳтлĕхе.
Кăвакал сасси илтетпĕр,
Вăл кулать: «Нарт-нарт! Хе-хе!
Ăнланмастăп, ма тараççĕ
Çумăртан ку ачасем?
Ахаль чух ялан лараççĕ
Кӳлĕ хĕрринче хăйсем?»

**Тутă пулнă ир тăни**

Шурă чăх хуллен утать,
Ка-ка-как! тесе юрлать.

Пĕсехи ун туп-тулли, —
Тем те пулнă ун валли.
Хĕвелпе пĕрле тăрса
Аннă вăл кашта çинчен.
Ыттисем анасласа
Ларнă имĕш темĕнччен.
Халь вĕсем лупашкара
Çимелли шыра-шыра
Чавалаççĕ васкаса,
Хăшкăлчĕç кăт-кăт сăхса.
Шурă чăх хуллен утать,
Ка-ка-как! тесе юрлать.
Тутă пулнă ир тăни,
Выçă — çывăрса юлни.

В. Тимаков

**Ман пĕлес килет нумай**

— Кукамай, теп, кукамай,
Ман пĕлес килет нумай.
Шыв юхать анаталла.
Мĕншĕн унăн юхмалла?
Çумăр ӳкрĕ çĕрелле.
Мĕншĕн унăн ӳкмелле?
Акăш вĕçрĕ çӳлелле.
Мĕншĕн унăн вĕçмелле?
— Пĕлессӳ килет нумай,
Шухăшла, — тет кукамай.
Шыв юхать — ун юхмалла,
Çырмана васкамалла.
Çумăр çурĕ — çумалла,
Пахчана шăвармалла.
Акăш вĕçрĕ — вĕçмелле,
Пĕлĕте ун çитмелле.

В. Тимаков

**Качакан çуралнă кунĕ**

Паян иртенпех
Хăна качакан —
Шап-шур чăхсемпе
Тăрать сар автан.
Кунтах кăвакал,
Пăлханчăк кăркка.
Мухтанчăк хурсем
Палкаççĕ хĕрсех.
Сире качакан
Мĕнпе хăналас?
Сар тулă парсан,
Тен, пулăр хавас?
Ĕне мăшлатса,
Сăпайлăн утса
Кĕрет картишне
Ертсе пăрушне.
Тăп-тăп сурăхсем,
Кăтра путексем
Кĕлет хыçĕнчен
Тухаççĕ хуллен.
Мĕнпе вĕсене
Хăна тумалла?
Çаран курăкне
Çулса памалла.
Чĕнмен чанана
Паян хăнана.
Вăл пурпĕр кунта
Пуласшăн пăртак.
Сарса çунатне
Анать картишне.
Пурах çимелли,
Чана, сан валли.
Савса кашнине
Хуçа хăналать.
Çуралнă кунне
Вăл паллă тăвать.

А. Тимпай, Г. Юмарт

**37 сас палли**

**А**слăк çинче сар автан
Авăтать пур кăмăлтан.

**Ă**мăрт кайăк — ту çинче,
Ăсан — ăвăс тăрринче.

**Б**аржа Атăлпа пырать,
Боцман ун çинче тăрать.

Вăкăр хытă мĕкĕрет,
Вĕрлĕке пырса хирет.
Вăркăнать вăл витене,
Вăркăнтарать витрене.

Гриша груша юратать,
Груша ăшша юратать.

Дыня чашăкра выртать,
Дуня ăна юратать.

Ешĕл улăх çиййĕпе
Ейӳ кайнă, шыв шавлать.

Ё сасăпа чăвашсен
Пуçланмаççĕ сăмахсем.

Ĕне пăван çыртнипе
Ерĕхтерет ĕшнепе.

Жирафа ăçта шырас?
Журналта иккен жираф.
Жилетки чăпар-ула.
Женя, кил, пĕрле вула.

Зебрӑна кичем тӗнче:
Зубр — вӑрӑм ҫӑмлӑ вӑкӑр —
Зоопарк картишӗнче
Зебрӑна тӗкесшӗн, пӑхӑр.

Икерче кам юратмасть?
Иллене те вӑл пӑсмасть.
Инкӗш ҫавӑнпа пӗҫерчӗ
Ир-ирех паян икерчӗ.

Йӗлтӗрпе тухап хире
Йытӑпа пӗрле ирех,
Йытӑ чупрӗ чи малтан,
Йӗр йӗрлетпӗр сунарта.

Каҫӑр пуҫлӑ качака,
Кутӑнскер, чака-чака
Калча урлӑ тӳрӗрен,
Каскӑн, тарчӗ кӗтӳрен.

Лав туртса пырать лаша,
Лакӑм-тӗкӗмре ашать.
Лӗпӗш ун тавра вӗҫет,
Лайӑх манӑн пурнӑҫ тет.

Мулкач килнӗ, авӑ курӑр,
Мамӑк тумӗ юр пек шурӑ.

Нӑрӑ тухнӑ ҫур ҫитсен
Нӳрӗ, ӑшӑ килӗнчен.
Нӑррӑн тумӗ хуп-хура —
Начар мар хӑйне кура.

Орден ҫакнӑ асатте.
Орден — ҫӑлтӑрлӑ тетте.

Путене пӗтпӗлтетет:
Пурте хире тухăр тет.

Рак тытса килет Раман,
Раман ракран хăраман.

Сăсар ларать чăтлăхра,
Сăрт айӗнче, улăхра.
— Сăсар, камран эс хăран?
— Сунарçăсем тытасран.

Çапă çинче ирхине
Çерçи юрлать юррине:
«Çӗнӗ шăнкăрч йăвинче
Çемçе тӳшек сарăттăм,
Çара ура шăниччен
Çăматăпа ларăттăм».

Тӗкӗр стена çумӗнче.
Така унăн умӗнче.
Тăр-рăс! сикрӗ, пăркаланчӗ —
Тӗкӗрӗ чăл-пар саланчӗ.

Упа ирех утара
Утма çулпа уттарать,
Ула такка: так-так-так!
Утар çынни, сис пăртак!

Ӳпререн ăçта тарас?
Ӳплене кӗрсе тăрас.

Фельдшер сывлăх тӗрӗслет,
Футболист: «Эп сывă, — тет, —
Физзарядка тунăран,
Физкультурник пулнăран».

Хураçка ытла хаяр,

Хураллать хирте хăяр.

Циркульне вăр! çавăрать,
Цифрăсем Ванюк çырать,
Циферблат туса хурать.

Чĕрĕп утрĕ ерипен
Чăрăшлăхăн хĕррипе,
Чăштăр-чăштăр! илтрĕ те —
Чăмăркка вăл пулчĕ те.

Шăпчăк сирчĕ ыйхине,
Шупка шуçăм хăпарсан
Шăрантарчĕ юррине
Шилетсе те шăхăрса.

Щеткăпа шăл тасататпăр.
Щитпа вăрçăлла вылятпăр.

«Кивçен» илнĕ сăмахра —
«Подьездра» та «разьездра» —
Пур çак хытă сас палли,
Сасă çеç çук ун валли.

Ыраш пиçсе ĕлкĕрет,
Ыран-паян вырмалла,
Ылтăн тырă пӳлмере
Ытлăн-çитлĕн пулмалла.

Ку сас паллин сасси çук
Çемçетме çеç кирлĕрен.
Унсăр сăмах çырнă чух
«Мăкăл» пулать «мăкăльрен».

Эрешмен карта карать,
Эрешсем çакса ярать.
— Эс, шăна, кăшт асăрхан:

Вилĕм тупăн çаклансан.

Юманлăхра юр çăвать,
Юс чупать те йĕр тăвать.

Ялкăш, ялав, уявра
Ялсенче те хулара!

И. Тукташ
**Тăван çĕршыв**

Çурхи хĕвел çуттăн курăнать,
Сӳнми хĕлхем сапса ăшăтать.
Çурхи хĕвелтен те хĕрӳллĕрех
Тăван çĕршыв пире ăшăтать.
Шур акăшсем аслă Атăлта,
Мĕншĕн шурă тесе калас мар?
Хам çуралнă Тăван çĕршывăма
Мĕншĕн анне тесе калас мар?

И. Тукташ
**Хĕллехи илем**

Вăш-вăш, вăш-вăш ай çил вĕрет.
Каш-каш, каш-каш вăрман кашлать.
Шап-шур сухаллă Хĕл Мучи
Питрен-куçран ай хыпашлать.
Ух!

Çил ачисем сиккипеле
Кĕртсем тăрăх чупкалаççĕ,
Мĕн пур хăрăк туратсене
Турта-турта хуçкалаççĕ.
Шарт!

Армак-чармак вату юман

Шухă çилпе ай тавлашать.
Чĕрик-чĕрик чĕриклетсе
Аллисемпе сулкалашать.
Ух!

Тулли уйăх пĕлĕт çине
Хуллен-хуллен шуса тухать.
Лăпкă-лăпкă ялсем çине
Ылтăн-кĕмĕл пĕрчи тăкать.
Эх!

Турхан Хĕветĕрĕ

**Тăвăл**

Хура вăрман шавласа
Хăвăрт-хăвăрт тайăлать,
Йывăç çулçи хумханса
Лĕп-лĕп туса ал çупать.
Ватă хăрăк йывăçăн
Ĕмĕрĕ паян татăлать,
Вăл сасартăк йăвансан
Пĕтĕм вăрман янăрать.
Кайăк сасран хăраса
Сиксе тăрса пăхкалать,
Ним те çукран çаврăнса
Каллех хӳтте вырнаçать.
Хура пĕлĕтсем, тинес пек,
Ăçта çитессе пĕлмеççĕ —
Пĕтĕм çĕре хуплас пек
Хăрушшăн-хăрушшăн иртеççĕ.

Уйăп Мишши

**Хĕл çитрĕ**

Шурă юрĕ çурĕ, çурĕ,
Таврана шап-шурă турĕ.

Çунасем юр çиййӗн шурӗç,

Килчӗ çитрӗ Хӗл Мучи!

Уйӑп Мишши

**Теттесем**

Пӗчӗк Петӗр тантӑшне
Вӑйӑ выляма чӗнет:
— Кил, — тет, — Сантӑр, выляма,
Манӑн теттесем нумай.

Ку — ӗне, вӑл сӗт парать,
Му! тесе вӑл макӑрать.
Акӑ кукӑр мӑйрака —
Сӗкӗшме ӑста така,

Кӑвакал, автан та хур,
Йытӑпа кушак та пур.

Ку — машина, ун çине
Эп тиеп теттесене.
Турттаратӑп алӑкран
Пуçласа тӗпел таран.

Лаши çеç ларасшӑн мар,
Эсӗ тет хама чуптар.

Ку ак самолет, хитре
Ярӑнать вӑл пӗлӗтре.

Ку шӑхличӗ, шӑхӑрать,
Шӑхӑртса пӑх, ан хӑра...

Пӗчӗк ачасем валли

Уйӑп Мишши

**Автобус**

Тӳрӗ тикӗс çулпала
Пӗр автобус вӗçтерет.
Хăйне ирӗк çул пама
Таçтанах вӑл систерет.

Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатӑн вӗт, асту!

Ай-хай лаши ӑмӑртса
Çул айккипе сиктерет.
Автобусе васкаса

Тата хытă вĕçтерет.

Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Çулна лайăхрах асту.

Я. Ухсай

**Пуканесен бригади**

Кирле ятлă шăллăм пур ман,
Ăслă та чипер ача.
Тап-таса хăй — кирĕк курмăн, —
Калаçма чĕлхи ачаш.
Ир-ирех паян вăранчĕ,
Çăвăнчĕ вăл супăньпе,
Хăнари пекех тумланчĕ,
Тăхăнчĕ шап-шур кĕпе.
Куç кĕски çине пăхса та
Савăнса турать çӳçне.
Уринче — çемçе кăçатă,
Шурă шарф — мăйĕнче.
— Шăллăм, мĕн сана çитмерĕ
 Çакă вичкĕн сивĕре?
— Анчăк выçă пулĕ, — терĕ.
(Анчăкĕ тулта вĕрет.)
Хăй йытти валли вăл тунă
Ансăр йывăç валашка.
Кил картне çĕрле юр çунă
Рис кĕрпи пекех кăпка.
Шăллăм тухрĕ те тултарчĕ
Лĕп çеç шыв валашкана,
Иĕкĕр ывăç çăнăх ячĕ
Виçнĕ пек пĕлсе кăна.
Çапă вĕçĕпе пĕр-иккĕ
Пăтратать те çăнăхне
Тутипе шĕвик-шĕвиккĕн
Шăхăрса чĕнет тусне.
Кăлтăрмач хӳреллĕ анчăк
Хӳтĕ пăлтăр айĕнчен

Йăпăрт тухрĕ те çулланчĕ
Манăн шăллăм умĕнче.
Апатушăн эпĕ хапăл,
Тав тăватăп тенĕ пек,
Хуçине пăхса илет вăл
Вир пĕрчи пек куçĕпе.
2
Шăллăм кĕчĕ те, ун пичĕ
Хĕрлĕ-хĕрлĕ, чăн хăмач.
Çийĕ-пуçĕ лайăх, питĕ,
Хăй ĕçчен, тĕкех тăмасть.
Ывăçне тултарнă тулă.
— Мĕн тăватăн, шăллăм, халь?
— Кăсăя çиесшĕн пулĕ,
Юрласа памасть ахаль.
Читлĕхре ларать шеп кайăк,
Чĕвĕл-чĕвĕл кĕвĕлет.
Хĕллехи кунта сасартăк
Май тĕнчи пӳрте кĕрет.
Шăллăм пĕр самант та пушă
Лараймасть иккен килте.
Мĕн тума вăл чĕрĕ пушăт
Ярса тытрĕ тĕпелте?
Тытрĕ кăчăрт-кăчăрт хачă,
Пушăтран чипер кăна
Ут мĕлки туса хăтланчĕ,
Утлантарчĕ пĕр çынна.
Чӳрече çине йĕрлерĕ,
Çыпăçтарчĕ каснă хут.
— Мĕн тăватăн, шăллăм? — терĕм.
— Мĕншĕн йышлă юлан ут?
— Ха, пичче, илемлĕ мар-и?
Урăм-сурăм вăрçă, — тет, —
Ак Чапаев утлă çарĕ
Колчака, — тет, — хӳтерет.
3
Тепĕр шухăш шухăшларĕ

Селĕп шăллăмçăм Кирле,
Выляма тата пуçларĕ
Пуканисемпе пĕрле.
Вĕсене пухса тиерĕ
Пушăт урапа çине.
— Тилхепе тытса пыр! — терĕ
Пĕр пĕчĕк пуканине.
— Шăллăм, эс кунта ахаль-и
Лартăн анчăка кӳлсе?
Мĕншĕн ушкăн-ушкăн халĕ
Пухăннă пуканисем?
— Тыр вырма каять бригада.
Тăкăна пуçланă вир.
Лавçă пек ларать пĕр ватă.
Вăл — Филиппов бригадир. —
Шăллăмçăм тухма тумланчĕ,
Алăка ярлаттарса
Уçнă хыççăн вĕрчĕ анчăк,
Тухрĕ урапа туртса.
Васкаса тухать бригада
Шурă юрлă урама.
Хĕллехи хаяр кунта та
Шăллăм кайрĕ тыр вырма.

Л. Федорова

**Шураппа тупри**

Вун ик тӳмеллĕ пушмак —
Шураппа тупри,
Мĕн тери савăнтарать
Çав тупра пурри.
Арчаран вăл кăларать
Сар çӳçеллĕ тутăрне,
Çыхтарать пире.
Арчаран вăл кăларать

Улача пире.
Хăй çĕленĕ кĕпепе
Ярăнса утать.
Пăнчă-пăнчă тăваткал
Тĕрĕ курăнать.
Парашют пек сарăлать
Аркинчи хурта.
Хӳхĕм хам та пулмалла
Тăхăнсан ăна.

Л. Федорова
**Кукамай**

Йăрă манăн кукамай:
Пĕр лара-тăра пĕлмест.
Тем тăвать тулта пĕрмай?
Чĕнтĕм те — пӳрте кĕмест.
— Касрăм сурăхăн çăмне,
Сурăм, — терĕ, — ĕнене,
Хăваларăм уялла,
Ыттине те тумалла.

Л. Федорова
**Кушак**

Çывăратăн кунĕпе,
Куç хупмастăн çĕрĕпе.
Тирĕке хăйма ярсан
Хăвăрт ыйхă çĕтрĕ сан:
Йăкăлт сикрĕн урайне,
Хăвармарăн хăймине.
Питĕ çăмăллăн пусан,
Кăлармастăн эс тусан.

Л. Федорова
**Хур ами**

Хур ами пур пирĕн,
Вăл ларать каç-ирĕн.
Вун ик çăмарталлă,
Лăпкă, пархатарлă.
Йăшăл та тумасăр,
Урама тухмасăр
Кăларасшăн чĕпĕ,
Шавламастăп эпĕ.

Л. Федорова

**Упа**

Упа, упа, утаман
Улама вĕреннĕ.
Улайран та хăраман,
Утара иленнĕ.
Уçăп пăшалне перет:
Ух! çеç Ухлаттарчĕ.
Упа
Урнăн мĕкĕрет.
Усси çук,
Уттарчĕ.
Унтанпа халь
Утара
Упасем килмеççĕ.
Уçăппа
Улай
Унта
Уçăлса çӳреççĕ.

В. Харитонов

**Мăр-мăр кушак**

Кушак мăр-мăр мăрлатать,
Хӳрине тек пăтратать.
Тăрăххăн сикет — çитесшĕн,
Алăри пулла çиесшĕн.

Парӑттӑм пулла ӑна, —
Тухӗ тетӗп наяна.

В. Харитонов

**Аслати**

Аслати хыт кӗмсӗртетрӗ,
Асатте пек мӑкӑртатрӗ.
— Килсене вӗҫтерӗр, — терӗ.
Те шӳтлерӗ, те хӑратрӗ.
Килсене эпир кӗместпӗр,
Ҫумӑр иртессе кӗтетпӗр.
Ҫумӑр хыҫҫӑн ҫаруран
Чупма лайӑх урамра.

В. Харитонов

**Кӗркунне**

Шӑннӑ, ӗнтӗркенӗ
Ҫамрӑк улмуҫҫи.
Сарӑ тум пӗркеннӗ
Ҫирӗк йывӑҫҫи.
Авӑнать йӗлме тек,
Ҫулҫисем чӗтреҫ.
Кивелми тумли те
Ешӗл чӑрӑш ҫеҫ.

В. Харитонов

**Пулӑшу**

Пысӑк валашка ларать.
Шывне кам-ши хумхатать?
Кӗрсе ӳкнӗ чӑх чӗппи,
Тухаймасть — ҫитмест тяппи!
Ун тавра кӑт-кӑтиклет,
Ҫаврӑнать чӗп амӑшӗ.

Çунатне усса çӳрет:
Эсӗ пулӑшаймӑн-ши?
Эп иртеттӗм çывӑхран —
Чӗппе çӑлтӑм путасран.

В. Харитонов

**Çил ачи**

Пӗр каç кӳлӗм çил ачи
Чупма тухрӗ катаччи.
Шак! шаккарӗ мӑрьене,
Çӳçентерчӗ Марьене.
Тухрӗ те вӑл çул çине
Вирхӗнчӗ вӑрман енне.
Шӑхӑрать хӑй ши! те ши!
Ун пек вичкӗнни пур-ши?
Кам чарайӗ пуçтаха? —
Пырса çитрӗ чӑтлӑха:
Пӗтӗрнет те çаврӑнать,
Йывӑçсене çапӑнать.
Хурӑнсем ура хураççӗ,
Малалла куçма памаççӗ.
Калла кайӗччӗ килне —
 Вӗрене пӳлет çулне.
Çул ыйтать вӑл шӗшкӗрен.
— Эс мӗскер çӗрле çӳрен? —
Тет те мӑйӑр йывӑççи,
Ашкӑнма чарнать шух çил.
 Çӗтсе кайнӑ çил ачи:
— Кирлӗ мар, — тет, — катаччи...
Çӳресе ӗшеннӗскер,
Çӗр çине выртать хайскер.
Хӗрелсе хӗвел тухать,
Çил ачи ыйха путать.

Г. Харлампьев

**Йĕп те пур, çип те пур**

Пăлтти-палтти
Сиккелесе кам çӳрет?
Куянсем. Ак вĕсем.
Тупнă вăйă, пăхăр-ха!
Пĕрин урлă пĕри,
Теприн урлă тепри...
— Ай!
— Мĕн пулчĕ?
Чăрсăрри,
Харсăрри
Турат çине лекрĕ.

Шăлаварне,
Чи хаклине,
Çурмаранах çурчĕ.
Ак инкек:
«Йĕп çук,
Çип çук,
Мĕнле саплас халь ăна?»
— Чим.
Йĕп те пур,
Çип те пур.
— Ăçта?
— Çип арлама
Эрешмен Пит ăста.
Йĕппине,
Киввине,
Хăйне кирлĕ маррине,
Илме пулать чĕрĕпрен.
Йĕп тупрĕç,
Çип тупрĕç,
Шăлаварне сапларĕç.

А. Хум
**Хăрамарăм хурсенчен**

Эп-и ашкăнчăк, анне?
Эп-и алхасап, атте?
Çӳплемерĕм урайне,
Çĕмĕрмерĕм пĕр тетте.

Эп-и пĕчĕккĕ, пичче?
Эпĕ-и айван, аппа?
Хăрамарăм хурсенчен,
Хăваларăм патакпа.

А. Хум
**Курак йăвисем**

Пĕчĕк Настя çăварне
Тĕлĕнсе карса пăрахнă:
— Кам-ши йывăç тăррине
«Çĕлĕксем» персе тултарнă?

Сарăлса ларать йăмра,
Пĕлĕтсем хуллен шăваççĕ.
Çĕлĕк-йăвасем тавра
Кураксем хĕрсех шавлаççĕ.

А. Хум
**Кăсăя**

— Ку суя,
Ку чăн, —
Тенĕ пек пĕр чун
Сиккелет сив кун.
- Кăсăя,
Ан шăн, —
Тетĕп эп ăна. —
Акă çимелли
Эпĕ сан валли
Хутăм балкона.
Чăкăта
Сăх эс кăт та кат.
Чăкăта
Кат та çăт,
Кат та çăт.

А. Хум
**Тем те ăсталатпăр**

Тем те ăсталатпăр
Нӳрĕ хăйăртан.
Акă çурт лартатпăр,
Ак хӳме тăватпăр —
Курăнтăр таçтан.

Пурте пултăр килĕн.
Сад пахчи те кирлĕ.
Кам тума пĕлет,
Вылямашкăн килĕр
Пирĕнпе пĕрле.

А. Хум

**Кукамайăн миçе чăх?**

Кукамайăн миçе чăх?
Лайăхрах, юлташăм, пăх.
Иккĕш тухрĕç урама
Курăк вăрри пуçтарма.
Хăваларĕ виççĕшне
Хураçка кĕлет айне.
Йăвара ларать пĕри,
Пахчара çӳрет тепри.
Пахчари кăтиклетет,
Çимелли эп тупрăм тет.
Вăл пурне те килĕр тет.
Миçе чăх-ши? Кам пĕлет?

А. Хум

**Кăткăсем**

Сĕм вăрман кашланăçем
Хĕвĕшеççĕ кăткăсем.
Купалаççĕ пĕрисем
Тĕрлĕ çапă-пĕрчĕсем.
Сĕтĕреççĕ теприсем
Хурт-кăпшанкă пикенсе.
Эх, мăнтарăн кăткисем
Кун каçа мекеçленсе
Ывăнаççĕ пуль хытах.
Ма канмаççĕ-ши кăштах?
Яранса çурер перре
Тĕтĕм явăнать —
Пуйăс ыткăнать:

Тепловоз туртать ăна.
Пирĕн çуртăн мăрйинчен
Тĕтĕм ирсерен
Палкаса тухать темччен, —
Мĕншĕн пӳрт каймасть çулпа?
Лартмалла-ши урапа?
Урапа лартас пулсан
Хускалать-ши вырăнтан?
Çурт,
Тапран
Вырăнтан,
Турт
Эс пĕтĕм картишне.
Кĕлете турт, витене.
Сыснана турт, ĕнене.
Ан хăвар эс чăхсене.
Турт мăнаçлă хурсене.
Тепловоз пек турт пире —
Ярăнса çӳрер пĕрре.

А. Хум

**Марине**

Питĕ ĕçлĕ Марине:
Пур ун пĕчĕк пукане,
Кăлтăр-кăлтăр урапа.
Пукане паян унпа
Катаччи каллех чупать.
Пукане пырать ларса,
Марине пырать туртса.
Савăнать пуль пукане,
Савăк хăй те, Марине.

А. Хум

**Эп, Наташа**

— Кам ирпе çăвать питне,

Пуçтарать хăй вырăнне?
— Эп, Наташа.

— Кам алри пуканине
Ӳкерсессĕн хĕрхенет?
— Эп, Наташа.

— Амăшне кам юратать,
Хытă-хытă ыталать?
— Эп, Наташа.

А. Хум

**Анне кулли**

Анне кулли —
Хĕвел шевли.
Анне кулли —
Чи илемли.

Анне кулсан
Чунра аван:
Юрлас килет,
Ташлас килет.

А. Хум

**Пĕчĕк йыттăм пур**

Пĕчĕк йыттăм пур,
Юр пекех шап-шур.
Çăмăл ун ури,
Çаврака хӳри.

Пăнчă пек сăмси.
Ян каять сасси.
Вăл манпа вылять,
Вăл мана сыхлать.

А. Хум

**Мĕне мĕнле чĕнеççĕ?**

— Пăç-пăç-пăç тесе чĕнеççĕ,
Хăвалаççĕ прис! тесе
Мĕне?
— Кушака.

— Кăть-кăть-кăть тесе чĕнеççĕ,
Хăвалаççĕ кша! тесе
Мĕне?
— Чахсене.

— Чух-чух-чух тесе чĕнеççĕ,
Хăвалаççĕ хаç! тесе
Мĕне?
— Сыснана.

— Анчăка мĕнле чĕнеççĕ?
Хăвалаççĕ мĕн тесе?
— Анчăка ятран чĕнеççĕ,
Хăвалаççĕ кай! тесе.

Хумма Çеменĕ

**Хĕллехи вăрман**

Çаппа-çара йывăçсем
Шавламасăр лараççĕ.
Пас айĕнчи туратсем
Темле мăннăн курнаççĕ.
Унта-кунта кĕрт çинче
Тилĕ чупни палăрать.
Сукмак пекки пур çĕрте
Йĕлтĕр йĕрри тăсăлать.
Сисмен хутран пуç çине

Юр чӑмакки ӳккелет.
Ҫӑка тӑрри ҫилпеле
Лӑстӑртатать, силленет.
Каҫ та пулса ҫывхарать,
Тӑмана та вӑранать.
Пусӑ урлӑ ялалла
Вӗҫсе кайрӗ чӑх тытма.

С. Шавлы

**Пакша**

Йывӑҫ тӑрӑх сиккелет
Ҫӑмламас пакша.
— Эй, пӑх-ха: илемлӗ те, —
Тетӗп юлташа.

Хӑвӑлне кӗрсе каять,
Мӑйӑр шӗкӗлчет;
Каялла сиксе тухать,
Чӑйлатса илет.

Клентӗр евӗр хӳрине
Кукӑртайнӑ хӑй,
Шӑп пӗр ҫуллӑх мӑйӑрне
Пуҫтарайнӑ хӑй.

Н. Шелепи

**Шӑпчӑк**

Мухтанмастӑп, вӗҫместӗп
Хитре тесе сӑнӑмпа:
Иртен-ҫӳрен ҫынсене
Тӗлӗнтереп юррӑмпа.

Эп юрлама тытӑнсан
Сар кайӑк та вӑтанать,
Йывӑҫ ҫулҫи хушшине
Тӗттӗм ҫӗре пытанать.

Н. Шелепи

**Сар кайăк**

Тĕкĕм-çӳçĕм сап-сарă,
Сар чечек пек курăнать.
Юррăмпа та сăввăмпа
Çут çанталăк шăранать.

Манăн саспа сĕм вăрман
Пер киленсе янăрать,
Чаплă юрă-сăвăра
Уяври хал туйăнать.

Н. Шелепи
**Пыл хурчĕ**

Пин-пинĕпе пĕрлешсе
Савăнăçлăн пурнатпăр,
Ĕмĕр пĕрле ĕçлесе
Пĕрле ĕçсе çиетпĕр.

Килĕштерсе пурăнма
Питĕ лайăх пĕлетпĕр,
Мĕн пур хитре чечекрен
Пыл сĕткенне илетпĕр.

В. Шемекеев
**Йĕрем мар эп, савăнам**

— Кайăк, эс ăçта вĕçетĕн?
— Эп вĕçетĕп ял тавра.
— Кайăк, эсĕ ма йĕретĕн?
— Чĕппĕм çуккă йăвара.
Йăвана такам ухтарнă,
Чĕппĕме таçта пытарнă,
Çавăнпа йĕрсе вĕçетĕп,
Чĕппĕме тупасчĕ тетĕп.
Ачасем, эсир курман-и?
Манăн чĕппĕме тытман-и?
Тытнă пулсан йăвана
Хурăр каялла ăна.
Йĕрем мар эп, савăнам,
Пурсăра та тав тăвам.

Н. Шупуççынни

**Шăпчăк**

Хĕвел анчĕ, тĕттĕмленчĕ,
Çырма-çатра пытанчĕ,
Сăрт тăррисем шĕвĕрĕлчĕç,
Симĕс вăрман хуралчĕ.
Канлĕхе хурал тăма
Уйăх тухрĕ шуралса.
Таса хирсем, тӳлек шывсем
Кайрĕç хуллен çуталса.
Çĕмĕрт çинче шăпчăк ларать
Икĕ турат хушшинче,
Кĕтет вăхăт вăл юрлама
Çуйсăр çур çĕр тĕлĕнче.
Шелттĕм-шелттĕм ăвăс çулçи,
Хуллен-хуллен ална çуп.
Шелтĕр-шелтĕр сив çăл шывĕ,
Таш ташласа инçе чуп.

Н. Ытарай

**Кулине**

— Ăçтан тупнă Кулине
Килĕшӳллĕ куллине?
— Ирхи хĕвел куллине
Илнĕ пулĕ хăй çине.
— Ăçтан тупнă Кулине
Савăнăçлă кăмăлне?
— Ирхи кайăк сассине
Илнĕ пулĕ хăй чунне.
— Ăçтан тупнă Кулине
Яланхи тирпейлĕхне?
— Ашшĕ-амăш ĕçлĕхне
Илнĕ пулĕ хăй чунне.

Н. Ытарай

**Хĕвел**

— Хёвел ăçта çĕр каçать?

— Ăшă-ăшă йăвинче.

— Хёвел ăçта çывăрать?

— Кăвак чатăр айĕнче.

— Хĕвел айне мĕн сарать?

— Мамăк хывнă тӳшекне.

— Пуçĕ айне мĕн хурать?

— Шурă пĕлĕт минтерне.

— Çиелтен мĕн витĕнет?

— Çăлтăр сапнă виттине.

— Мĕнле тĕлĕк тĕлленет?

— Çĕр çинче мĕн курнине.

Н. Ытарай

**Анчăк килĕ**

Ак ĕнтĕ те мак ĕнтĕ,

Анчăк килĕ çак ĕнтĕ:

Алăкĕ ун — çавракa,

Алăк хуçи — Хураçка.

Алăк хуçи — Хураçка,

Ытла та усал, ваçка.

Хăтсăр çынна курсанах

Хыттăн вĕрет яланах.

Н. Ытарай

**Асанне**

Асанне ирех тăрать —

Ăш ыйхăран вăратать.

Вăратнă май сăмахлать:

— Каçпа часах выртмалла,

Ирпе ирех тăмалла.

Кам ирпе ирех тăрать —

Пултаруллă çын пулать.

Н. Ытарай

**Кăвакал чĕпписем**

Кăвакал чĕпписем ирхине
Картипе анаççĕ шыв хĕрне:
Маттурри — чи малта,
Халсăрри — хыçалта.

Кăвакал чĕпписем каçхине
Картипе утаççĕ кил енне:
Халсăрри — чи малта,
Маттурри — хыçалта.

Н. Ытарай
**Мулкачă**

Çеремлĕхре мулкачă
Сиккелет:
— Çиес килет кулачă! —
Текелет.

Сăмахлама мулкачă
Пит ăста:
Уншăн кăпăш кулачă —
Купăста.

Н. Ытарай
**Пакшапа хӳре**

— Пакша, ăçта пурăнан?
— Вăрманта.
— Хăш вырăнта çĕр каçан?
— Хăвăлта.
— Пĕвӳ айне мĕн саран?
— Хӳрене.
— Пуçу айне мĕн хуран?
— Хӳрене.
— Мĕн пĕркенен сивĕре?
— Хӳрене.
— Миçе вара сан хӳре?
— Пĕрре çех.

Н. Ытарай
**Ĕне**

Тĕлĕнмелле ĕнерен:
Ĕне кавлет вĕçĕмрен.

Кавленӗрен вӗҫӗмрен
Сӗтне парать кунсерен.

Ӗне сӗчӗ шурӑ-ҫке,
Калама сук сиплӗ-ҫке,
Калама ҫук тутлӑ-ҫке,
Пире ҫиме чухах-ҫке!

Н. Ытарай
**Автан**

Автан сасси алӑ пус,
Автан хӳри хӗрӗх пус.
Авӑтакан автан тус —
Авалтанпах пирӗн тус.

Н. Ытарай
**Илемпи**

Пирӗн пӗчӗк Илемпи
Пуринчен те илемли,
Пуринчен те сӑпайли,
Пуринчен те хисепли.

Пирӗн хӗр пек илемли,
Пирӗн хӗр пек сӑпайли
Пур пулсассӑн тӗнчере
Пӗлтерсемӗрчче пире.

Н. Ытарай
**Чӑваш ачи**

Чӑваш ачи чӑвашах —
Чунӗ ӗҫре яланах:
Пӗр ҫул хушши сӑпкара
Пиеленсе пиҫӗхет.
Ик ҫул хушши вӑййара
Ирӗкленсе ҫитӗнет,
Виҫӗ ҫула ҫитсессӗн
Витре йӑтма вӗренет.
Тӑват ҫула ҫитсессӗн
Тукмак тытма тӗлленет.
Пилӗк ҫула ҫитсессӗн
Пилӗк авма сӗмленет.

Ултă çула çитсессĕн
Уя тухса вĕçтерет.

Н. Ытарай
**Чĕрĕп**

— Мĕскер пулнă Чĕрĕпе?
Мĕн тăвать вăл çĕрĕпе?
— Мĕн пултăр-ха Чĕрĕпе —
Йĕп шутлать вăл çĕрĕпе.
— Мĕскер пулнă Чĕрĕпе?
Ма йĕрет вăл иртенпе?
— Мĕн-ха пултăр, ир енне
Вăл çухатнă йĕппине.
— Мĕскер пулнă Чĕрĕпе?
Ма кулать вăл кунĕпе?
— Хăрăк йĕпсен купине
Хыр айĕнче курнипе!

Чĕм туянни
Курак мана чĕнтерчĕ —
Курăк яшки çитерчĕ.
Курăк çиме пĕлмесĕр
Тухса кайрăм парнесĕр.
Пăчăр мана чĕнтерчĕ —
Пăрçа яшки çитерчĕ.
Пăрçа çиме пĕлмесĕр
Тухса кайрăм парнесĕр.
Çăхан мана чĕнтерчĕ —
Çăмах яшки çитерчĕ.
Çăмах çиме пĕлмесĕр
Тухса кайрăм парнесĕр.
Чĕкеç мана чĕнтерчĕ —
Чĕлхе яшки çитерчĕ.
Чĕлхе яшки çинĕрен

Чĕм туянтăм чĕкеçрен.

Н. Ытарай

**Миçе пус?**

— Автан тус, Автан тус,
Ахах куçу миçе пус?
— Ки-ки-рук, ки-ки-рук,
Ман сутмалăх тавар çук!
— Автан тус, Автан тус,
Пăхăр пуçу миçе пус?
— Ки-ки-рук, ки-ки-рук,
Ман сутмалăх тавар çук!
— Автан тус, Автан тус,
Кĕмĕл качу миçе пус?
— Ки-ки-рук, ки-ки-рук,
Ман сутмалăх тавар çук!
— Автан тус, Автан тус,
Мерчен алку миçе пус?
— Ки-ки-рук, ки-ки-рук,
Ман сутмалăх тавар çук!
— Автан тус, Автан тус,
Ылтăн сассу миçе пус?
— Ки-ки-рук, ки-ки-рук,
Ман сутмалăх тавар çук!

Н. Ытарай

**Хĕл Мучи кучченеçĕ**

Хĕл Мучи кучченеçне
Валеçрĕмĕр туссене:
Арăслана — арахис,
Карсаксене — карамель,
Куянсене — купăста,
Кашкăрсене — катăркас,
Тилĕсене — тилпĕрен,
Ыттисене пурне те

Ылтӑн хутлӑ пӗремӗк.

Н. Ытарай

**Айван ача**

Айван ача чӗреспе
Куккӑш патне ярӑнать,
Куккӑш патне ҫитеспе
Хыр айӗнче чарӑнать.
Чӑпар куккук пикенсе:
— Кук-ку! — тесе авӑтать.
Айван ача тӗлӗнсе:
— Кукка! — тесе савӑнать.
Куккаш валли кучченеҫ
Чӗрессинчен кӑларать,
Кучченеҫне хыр айне
Пӑрахать те хӑварать.
Айван ача чӗреспе
Пиччӗш патне ярӑнать,
Пиччӗш патне ҫитеспе
Шур хӗррине чарӑнать.
Шур кайӑкӗ пикенсе:
— Пичи! — тесе сас парать.
Айван ача тӗлӗнсе:
— Пичче! — тесе савӑнать.
Пиччӗш валли кучченеҫ
Чӗресӗнчен кӑларать.
Кучченеҫне шур хӗрне
Пӑрахать те хӑварать.

А. Ыхра

**Уяв умӗн**

Тыркас мучи тыр вырать,
Сӑвӑр аппа сӑвӑрать.
Арлан арман авӑртать.
Пӑсарасем, шӑшисем,

Каюрасем, çерçисем
Чĕрес тавра чупаççĕ —
Чуста илсе унаççĕ.
Ача ячĕ хумалла —
Кушак ĕçке пымалла.

А. Ыхра

**Ырпи**

Кĕшĕл-кĕшĕл хур чĕппи —
Эх, епле хитре чуппи!
Хăшсем курăк сăхаççĕ,
Хăшсем шыва чăмаççĕ.
Вĕтĕр-вĕтĕр-вĕтĕрпи,
Хур чĕппи шутлать Ырпи:
— Пĕрре, иккĕ, виççĕ!
Тăххăр, саккăр, пиллĕк, çиччĕ! —
Ăна пиччĕш тӳрлетет:
— Тĕрĕс мар шутлатăн, — тет,
— Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă,
Пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр!
Пурĕ сакăр хур чĕппи —
Шутлама вĕрен, Ырпи.

А. Ыхра

**Витали**

Пултарать те Витали!
Хура çĕлĕк пуçĕнче,
Симĕс пальто çийĕнче.
Ярăнса анать сăртран —
Вĕлт те вĕлт! туйи вылять.
Витали çак самантра
Кăсăя пек туйăнать.

А. Ыхра

**Ĕçлемешкĕн вĕренер**

Кӳлхĕрринчи Кĕркури
Пулă тытма кайнă тет.
Пулă тытас вырăнне
Шапа тытса килнĕ тет.
Тиреклĕхри Тимахви
Тирек лартма тухнă тет.
Чĕрĕ турат вырăнне
Хăрăк турат лартнă тет.
Эх, мăнтарăн ачисем
Пирĕн ялтах ӳсеççĕ.
Ултă çула çитсен те
Ĕç йĕркине пĕлмеççĕ.

А. Ыхра

**Пăрчăкан пек хĕр ача**

Картишне те шăлмалла,
Чĕпсене те пăхмалла,
Пĕчĕк шăллĕ пылчăкланнă
Кĕпине те çумалла.
Ăшша пиçнĕ Униççе
Пăрчăкан пек чупкалать.
Амăш ĕçрен киличчен
Пӳртне-çуртне тасатать.

А. Ыхра

**Пĕчĕк хĕрсем**

— Эх, хитре-çке пĕчĕк хĕр! —
Тетчĕ ашшĕ Машука
Пуçĕнчен шăла-шăла.

— Эх, хитре-çке пĕчĕк хĕр! —
Машук хăй халь кушака
Ачашлать юрла-юрла.

А. Ыхра

**Çырлана**

Анне кайрĕ армана,
Атте кайрĕ
Вăрмана.
Эпĕ пĕчĕк Аннана
Ертсе кайрăм çырлана.

А. Ыхра
**Ӳс, хăярăм**

Ме-ке-кек тюттю парать,
Кăт-кăтик маття тăвать,
Хам-хам-хам кил-çурт сыхлать,
Пĕç-пĕç-пĕç шăши тытать.
Марине те ĕççĕр мар,
Шăварать садра хăяр:
— Ӳс, хăярăм, хăвăртрах,
Кавăнтан пул пысăкрах!

А. Ыхра
**Пăрахут**

Манăн атă — пăрахут,
Ту-ту-тут! Ту-тут! Ту-тут!
Хам сине кушак лартатăп,
Тинĕс урлă эп каçатăп.
Ту-ту-тут! Ту-тут! Ту-тут!
Кил моряк пулма, Хветут!

А. Ыхра
**Ляпук**

Ляпук пушмак тăхăннă —
Пĕри шăши урин пек,
Тепри паши урин пек.
Утса пырать урампа
Хĕрахшарăн пушмакпа.
Сылтăм ури шак-шак-шак!
Сулахайе лак-лак-лак!

А. Ыхра
**Сăрталла**

Минтер сине —
Минтер.
Çытар сине —
Çытар.
Анне, мана ан чар!
Эп ту сине улхатăп,
Çырла татса анатăп.

П. Эйзин
**Хĕлле**

Хура алсиш — алăра,
Шур çăматă — урара,
Кăвак тутăр — пуçăмра,
Сар çунашка — айăмра.

П. Эйзин
**Пирĕн хыçри вăрманта**

Пирĕн хыçри варианта
Урлă ура упа пур.
Упи лайăх, усал мар,
Пырсан — пылпа хăналать.

Пирĕн хыçри варианта
Мамăк хӳре пакша пур.
Пакши ĕçчен, кахал мар,
Пырсан — мăйăр тыттарать.

Пирĕн хыçри варианта
Вăрăм хăлха мулкач пур.
Хăй пачах та хăрамасть,
Пырсан — çырла хыптарать.

П. Эйзин
**Эп хамах**

Никамран та маларах
Эп паян вăрантăм.
Вырăна та эп хамах
Майласа пуçтартăм.

Çăвăнтăм сивĕ шывпа,
Тăхăнтăм, тумлантăм.
Пĕчĕк симĕс лейкăпа
Чечексем шăвартăм.

Çинĕ хыççăн эп хамах
Чашăк-тирĕк çурăм.
Чăхсене те эп хамах
Апат пама тухрăм.

Анне тĕлĕнчĕ. Тăрать
Ним те ăнланмасăр.
«Хам тăвап», — тесе калать
Вăл мана шанмасăр.

Эс, анне, мана ан чар
Ĕçлеме пĕрре те.
Эп халь пĕчĕк пепке мар,

Эп халь пысăк ĕнтĕ.

П. Эйзин

**Кăвак ӳкерчĕк**

Петĕр ларнă шăпланса,
Тем тăвать хăй тăрăшса.
Эпĕ пытăм та пăхатăп,
Ак мĕскер унта куратăп:
Кăвак курăк çиййĕнче
Кăн-кăвак чечек ларать,
Кăвак хурăн тăрринче
Кăвак шăнкăрчă юрлать,
Кассăн-кассăн çил вĕрет,
Кăвак тырă хумханать.
Кăвак тĕслĕ тӳперен
Кăн-кăвак хĕвел пăхать.
Эп каларăм Петĕре:
—Çитмĕл тĕс çут тĕнчере.
Мĕншĕн эсĕ култаратăн,
Кăвакпа кăна сăрлатăн?
— Ман пĕртен-пĕр кăранташ
Тăрса юлнă, — тет юлташ,
— Ыттисем йăлтах çухалнă,
Те юри манран пытаннă?

П. Эйзин

**Упа пӳрчĕ**

Пирĕн аслă вăрманта,
Юмахри пек вырăнта,
Утмăл тĕрлĕ курăк пур,
Çитмĕл тĕслĕ йывăç пур.

Пирĕн патри вăрмана
Пырас пулсан хăнана
Куçу кайĕ алчăрса,
Пуçу кайĕ çаврăнса.

Пирĕн чаплă вăрманта
Виç çĕр тĕрлĕ чĕр чун пур.
Ĕненмесен эс кунта
Ятарласа килсе кур.

Авă пĕр çурт йăтăнса
Ларать çуттăн ялкăшса.
«Кунта Кашкăр пурăнать», —
Тесе çырни курăнать.

Çав çуртпала юнашар,
Сылтăмĕнче, инçе мар,
Икĕ хутлă, мăнаçлă
Тилĕ çурчĕ вырнаçнă.

Кăшт маларах эс кĕрен —
Ларать тепĕр мăн кермен.

Унта ытти кайăксем,
Вĕтĕр-шакăр чĕр чунсем
Хуларинчен кая мар,
Ялтинчен те япăх мар,
Шăкăлтатса, савăнса,
Пурăнаççĕ ыр курса.

Пур чĕр чун та çĕнĕлле
Йĕркеленĕ пурнăçне.
Упа çеç ĕлĕкхилле
Ытараймасть çĕр пӳртне.
Тертленет вăл çырмара,
Нӳхреп евĕр шăтăкра.

Ыттисен хваттерĕнче
Ырлăх-пурлăх, пархатар.
Утаманăн килĕнче
Нӳрĕ, шăршă, таса мар.

Тилĕ тус та Упана
Чĕнми пулнă хăнана.
Кашкăр кум та тĕл пулсан
Сывлăх сунмасть нихăçан.

Катăк тута, чалăш куç,
Татак хӳре, шăтăк пуç —
Иртсе пырать пĕр Куян,
Кулма пăхать Упаран:

«Пирĕн паттăр утаман
Тăрса юлнă пурнăçран!»

Курак ларать кăшкăрса:
«Намăс вăрман хуçине!»

Кăтăрт-кăтăрт тутарса
Упа хыçать ĕнсине.
Каллĕ-маллĕ уткалать,
Унăн-кунăн пăхкалать,
Тунката çине ларать,
Тарăн шухăша путать.

Вăрманта ирех чак! чак!
Сас туса çӳрет Чакак:

«Нимене!
Нимене!
Упа патне нимене!
Хир сыснисем, куянсем,
Пăшисемпе кăткăсем,
Кам ӳркенмест пулăшма,
Атьăр пурте пӳрт лартма!
Эй, хăвăртрах, Чĕрĕп тус!
Эс те ан юл, Шăши юс!
Вăр-вартарах, ăтăрсем!

Тапкаланӑр, хӑнтӑрсем!
Тӑманасем, шӑпчӑксем,
Карӑксемпе карӑшсем,
Атьӑр пурте нимене
Упа тусӑмӑр патне!
Юрла-юрла ёҫлӗпӗр,
Чаплӑ кермен ҫӗклӗпӗр!»

Аслӑ вӑрман ян! янрать,
Чакак тус хыпар сарать.

Вӑхӑт иртрӗ васкаса.
Акӑ ҫитрӗҫ хашкаса
Упа патне чӗр чунсем,
Ырӑ чунлӑ ӗҫченсем.

Тӑват урапа чупакан,
Хырӑмпала шӑвакан,
Ҫунатпала вӗҫекен —
Пурте кунта пур иккен.

Калаҫаҫҫӗ, шӳтлеҫҫӗ,
Кускаласа ҫӳреҫҫӗ.

Тилӗ килчӗ чи кайран,
Уткалать аран-аран.
Найкӑшать хӑй, ахлатать,
Куҫҫульне те кӑларать.

«Ах, ыратать сылтӑм куҫ.
Ҫурӑлсах тухать-ҫке пуҫ».

Тилле эмел хыптарчӗҫ,
Сулхӑн ҫӗре вырттарчӗҫ.

Пурте тытӑнчӗҫ кӗҫех
Кам мӗн пӗлет, ҫав ӗҫе.

Икĕ Хăнтăр, ик юлташ,
Чăрăш касать чăш та чаш.
Пăчкине те туртаççĕ,
Юррине те манмаççĕ.

Пăши тытнă пурттине,
Якатать туратсене.

Хир Сысни, бульдозер пек,
Çĕр чакалать сăмсипе.
Сакай тарăн пултăр тет,
Пыл катки вырнаçтăр тет.

Кашниех тар юхтарса
Тăрăшса ĕçлет паян.

«Ап-пай!» — ячĕ çухăрса
Çав хушăра пĕр Куян.

Пурте шартах сикрĕçĕ,
Ăна сырса илчĕçĕ.

«Ним те мар-мĕн, ним те мар,
Пăлханмашкăн кирлĕ мар.
Шăрпăк кĕнĕ унăнне
Малти пĕчĕк тяппине.
Чĕнсе килĕр хăвăртрах
Ула такка тухтăра».

Ула такка унтах-мĕн,
Шăпланмашкăн ыйтать-мĕн.
Тытрĕ Куян урине,
Ак кăларчĕ шăрпăкне.
Сĕрчĕ сиплĕ сĕткенпе,
Çыхрĕ шăнăр курăкпе.

Хӗвел ҫӳле хӑпарса
Анӑҫалла сулӑнсан
Ӳсрӗ ларчӗ, пӑх та кур,
Тӗлӗнмелле хӳхӗм ҫурт.

Никӗсӗ ун юманран,
Пӗренисем ҫӑкаран.
Алӑкӗ — тухӑҫалла,
Чӳречи — кӑнтӑралла.

Пӳрт хӗррипе тӑррине,
Чӳречине, алӑкне
Элес-мелес тӗрӗпе
Хӑйӗн ҫивӗч сӑмсипе
Ула кайӑк таккаса
Илемлетнӗ тӑрӑшса.

Ӗҫ вӗҫленнӗ ячӗпе
Ваттисенӗн йӑлипе
Упа пичке пуҫларӗ,
Кӗске сӑмах каларӗ:

«Тайма пуҫӑм пурсӑра
Пулӑшнӑшӑн вӑхӑтра.
Пӳрчӗ лартӑр ҫитмӗл ҫул,
Ҫитмӗл ҫул та ҫичӗ ҫул,
Ҫулла кӳтӗр сулхӑнне,
Хӗлле тыттӑр ӑшшине.
Канлӗх патӑр каҫ выртсан,
Тимлӗх патӑр ир тӑрсан».

Тӗрлӗ-тӗрлӗ чӗр чунсем,
Ырӑ чунлӑ ӗҫченсем,
Ҫирӗҫ тутлӑ сар пылне,
Ӗҫрӗҫ уҫӑ шерпетне.

Хӗпӗртенӗ Упана,

Вăрманти утамана,
Сывлăх сунчĕç пÿрт тулли,
Упа çури — сак тулли.

Пирĕн аслă вăрманта,
Юмахри пек вырăнта,
Çавăн чухне мĕн ирччен,
Тул çутăлса киличчен,
Ян! янрарĕç юрăсем,
Кĕр! кĕрлерĕç ташăсем.

П Эйзин
Тяп-тяп тума

Тяп-тяп тума тяппи пур,
Çат-çат тума алли пур,
Нăш-нăш тума сăмси пур,
Чăр-чăр пăхма куçĕ пур.

П. Эйзин
**Кам камран хăрать**

Шăши хăрать кушакран,
Кушак хăрать йытăран,
Йытă хăрать кашкăртан,
Кашкăр хăрать упаран.

Упа, упа, утаман —
Хăрамасть вăл никамран.

П. Эйзин
**Ирхине**

Автан ячĕ авăтса:
Ки-ки-ри-ки!

Ячĕ чăх кăтăкласа:
Кăт-кăт-ик!

Çерçи ячĕ юрласа:
Чи-чи-чи!

Ячĕ сурăх макăрса:

Ма-а-а!

Ёне ячӗ мӗкӗрсе:
Му-у-у!

Ячӗ йытӑ та вӗрсе:
Хам-хам-хам!

В. Эктел
**Хӗвел**

Савӑнаҫҫӗ чӗр чунсем,
Хӗпӗртеҫҫӗ кайӑксем:
Ҫӳл тӳпе хӗвеллӗ,
Ачасем телейлӗ.

Кашни кун хӗвел пуртан
Выляма ирех тухсан
Эп юрлатӑп юрӑ —
Пурӑнмашкӑн ырӑ!

В. Эктел
**Самолет**

Пӗлӗтре чӗкеҫ вӗҫет,
Шур ҫиппе ӑна тӗрлет.
Чӗкеҫ мар-мӗн, самолет
Кӗрлесе вӗҫсе иртет.

В. Эктел
**Ҫулҫӑсем**

— Кам сӑрланӑ-ши, анне,
Вӗрене ҫулҫисене?
Пулнӑ тӑнӑ симӗсрен
Хӗрлӗ, сарӑ та кӗрен.
- Вӑл - асамҫӑ кӗркунне, —
Хуравларӗ ман анне.

В. Эктел
**Юр**

Вӗлтӗр-вӗлтӗр
Вӗлкӗшеҫҫӗ
Лӗпӗшсем.

Шурӑ чӗнтӗр
Пӗркенеҫҫӗ
Урамсем.

Ушкăн лĕпĕш
Анса ларчĕ
Ал сине.

Сивĕ сĕлкĕш
Пулса тарчĕ
Çĕр çине.

Лĕпĕш мар-мĕн,
Вĕлтĕр-вĕлтĕр
Юр çăвать.

Эп каларăм —
Шăллăм пĕлтĕр:
Хĕл ларать.

В. Эктел
**Лаша**

Урай тăрăх тĕпĕр-тĕпĕр
Ман лашам çӳрет.
Хушăран вăл тиха евĕр
Хыттăн кĕçенет.

Урхамах мана ӳкерчĕ,
Тарчĕ сак айне.
Çамкана сака лектерчĕ,
Çурчĕ кĕпене.

Лашама эсир пĕлетĕр
Каласан ятне.
Ман пичче — хаваслă Петĕр —
Унăн вырăнне.

В. Эктел

**Ача садĕнче**

Çу. Ĕççи.
Урам пушаннă,
Халăх тухнă уй-хире.
Ачасем анчах шăв-шавлă,
Савăнаççĕ яслире.
Петере эсир пелетĕр,
Петĕр тунă пăрахут,
Хăйăр тăрăх вăл çӳретĕр
Чăшăл-чăшăл, Ту-ту-тут!

Света çитрĕ,
Света çивчĕ —
Çĕнĕ çурт вăл купалать.
— Парăр виççĕ,
Парăр çиччĕ! —
Тăм та кирпĕч вăл ыйтать.
Тĕм хыçне пытаннă Оля —
Мулкач пек вăл пăхкалать.
Хăшкăлса шырать ав Толя —
Ниепле те тупаймасть.
— Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тваттă,
Эсĕ пиллĕкмĕш пулан, —
Пилĕк пӳрнине шутлать те
Çĕнĕрен пуçлать Иван.
Шăкăр-шакăр Вĕтĕ шакă
Йăтса килчĕ Кĕтерук:
— Ман çума эс лар-ха акă —
Иккĕн выльăпăр, Марук.
Упапа вылять ав Слава,
Тракторпа чупать Гришша,
Пукане çĕкленĕ Клава,
Ӳкерет карттин Мишша.
Валя, Галя
Пит тирпейлĕн
Ту çĕклеççĕ хăйăртан.
Космодром хайлаççĕ меллĕн
Петĕр, Хветĕр иккĕн тан.
Пурте кăмăллă, хаваслă,
Пурте сывă та маттур.
Савăнса ӳсмешкĕн аслă
Ман Тăван çĕршывăм пур.

В. Эктел

**Юр пике**

Тин çеç çунă шур юртан
Юр пике тăватпăр.

Йăмăх хура кăмрăкран
Мăшăр куç лартатпăр.
Акă пĕлĕт хыçĕнчен
Сар хĕвелĕ тухрĕ,
Юр пикен ик куçĕнчен
Çут куççулĕ юхрĕ.
— Мĕншĕн эсĕ, Юр пике,
Куççульпех йĕретĕн?
Сар хĕвелĕн ăшшипе
Хăвăрт ирĕлетĕн?
— Манăн пĕчĕк тусăмсем,
Çуркунне çывхарчĕ, —
Юр пике пире йĕрсе
Шăппăн ăнлантарчĕ.

Ç. Элкер

**Ёлка вăйăйи**

Пакша çури пăлтăртăк!
Турат çинчен кăлтăртăк!
Хăвăлсенче ӳсекен,
Вĕçнĕ пекех сикекен.
— Пакша çури, тух кунта!
Мулкач çури мăкăлтăк!
Ик урипе тăкăлтăк!
Лăпчăнайса çывăракан,
Хăпăл-хапăл тăракан.
— Мулкач çури, тух кунта!
Кашкăр çури капăртăк!
Тăват ури тăпăртăк!
Путек-сурăх тытакан,
Хĕл каçипе чупакан.
— Кашкăр çури, тух кунта!

Çуллахи каç
Пархатарлă ăшă каç...

Аслă тӳпе маччинче
Вĕт çăлтăрсем йăлкăшаç...
Пурте канать çĕр çинче.
Тапхăр кăна варкăшса
Уçă, нӳрĕ çил килет.
Çулçăсене хускатса
Алхасса пек вăл иртет.
Анчах вăрман хушшинче
Пĕр шăпчăк çеç шăпланмасть;
Уйра, çырма пуçĕнче,
Карăш автать — чарăнмасть.

Ç. Элкер
**Çуллахи çумăр**

Шăпăр-шăпăр çумăр çуса
Çĕр кăкăрне шăварать.
Иывăç-курăк хавасланса
Хăвăрт пĕве ярăнать.

Куштăрканă çамрăк вăрман
Ластăртатса силленет.
Улăх тăрăх ешĕл çаран
Чечексемпе витĕнет.

Ç. Элкер
**Тăри юрри**

Çететтин, çететтин,
Çитрĕм, çитрĕм ĕнтĕ тин...
Çак çĕршыва асилтĕм,
Хăвăрт вĕçсе эп килтĕм;
Пин çухрăмсем ярăнтăм,
Тем те курса савăнтăм.
Çететтин, çететтин,
Çитес çĕре çитрĕм тин...

Ç. Элкер
**Çуллахи ир**

Шупка шурăмпуçĕ
Шуса хăпарать,
Ирхи çăлтăр вучĕ
Сӳнсе çухалать.
Йăлтăр! сывлăмланчĕç
Чечек-курăксем,
Çерем çине анчĕç

Уйри кӗтӳсем.
Ҫӳлелле шӑваççӗ
Кӑвак тӗтресем,
Улӑха васкаççӗ
Хурсен картисем.
Хӗвел курӑнайчӗ —
Ҫӗр-шыв савӑнать;
Ял çынни вӑранчӗ,
Ӗçе тытӑнать.

В. Энтип
**Мамма**

Шӑп каç пулса килнӗ чух
Атте-анне килте çук.

Ак мана хӑратма
Тӗттӗмрен тухать мамма!

Ак пуçлать йӑшӑлтатма —
Ай, тискер иккен мамма!

Тӗксӗм сӑнлӑ — тӗтӗм пек,
Хӑрӑмланнӑ пӗтӗмпех.

Сарӑлать,
Пӗрӗнет,
Сассӑр пырса перӗнет.

Капланать,
Ҫаврӑнать,
Ман умрах чарӑнать!

Те вӑл тир тӑлӑппа,
Те таварнӑ кӗрӗкне —
Те мӗлке,
Те упа,
Чӑр пӑхать тӗкӗрпеле!

А. Юман
**Чи тутли**

Пӗчӗк Лена тӑрмашать,
Кукамӑшне пулӑшать.
Ҫатми çине çу сӗрчӗ —
Пӗçерет-мӗн икерчӗ.
— Эп кун пеккине курман,
Питӗ тутлӑ-çке... Аван!.. —

Терĕ Лена савăнса

Икерчĕне тутанса.

Пуплешет ват çын унпа:

— Ху пĕçернĕ, çавăнпа...

А. Юман

**Чĕкеç чĕлхи**

Пĕчĕк хĕрĕмçĕм Натюк,
Калаçма сан чĕлхӳ çук.
Анчах эсĕ ан кулян,
Час чĕлхеллĕ те пулан.

Ав куратăн-и, хĕвел
Сан çине пăхса купать.
Хĕрĕм, кур, тăрсам чĕвен, —
Çыр çамки хура пулать.

Инçе мар пек кĕтмелли...
Çуркунне сана валли
Чĕлхе кӳрĕ те чĕкеç —
Калаçмашкăн пуçлăн эс.

Г. Юмарт

**Ача-пăча хулинче**

Чуччусем кунта тем чул,
Мĕн тĕрли кăна çук пуль!
Шикленеттĕмччĕ ларма,
Хăнăхрăм та ярăнма
Сулăнтăм çӳлтен çӳле
Сывлăшăм пӳлĕнмелле.
Тĕрлĕ пĕчĕк кăруççел —
Çаврăнма кăна эс пĕл:
Е тытса пыр карлăкран,
Е сиксе лар аякран.
Пĕринче, чăнах, тĕнче
Чалăшмашкăн тытăнчĕ.
«Ытлашши эс ан васка, —
Тет атте лăпка-лăпка,
— Йăлăхсассăн ярăнса
Ыттине кур чарăнса».

Пĕчĕк ăйăр — çил çунат
Çĕкленет те усăнать,
Пускăчне пусма кăна
Ан шелле эс вăй-хална.
Кĕнекепе юмахри
Паттăрсем те тем тери
Илĕртеççĕ кăмăла:
Улăп ачи йышпала
Туслашма шутланă та,
Ачасене вăл кунта
Кăтартать хастарлăхне —
Карăнтарать уххине.
Çывăхрах — Лапшу Çтаппань,
Таврăнать вăл сунартан:
Ларнă çунашки çине,
Кӳлнĕ хăй куянсене.
Юлан утçă Сентти пур,
Кĕвентине пит маттур
Утланса вăл чуптарать,
«Пăрăнăр!» — тет, кăшкăрать...
Пĕчĕккисен хулинче
Тĕлĕнмелли — пĕр тĕнче!

Г. Юмарт

**Пĕчĕк туратна памăн-ши мана?**

Лапсака йăмра
Сарă кăчкăра.
Уншăн сар хĕвел -      -
Имлĕхлĕ эмел.
Ĕнтĕ иртенпе
Пинĕ-пинĕпе
Ылтăн хурт сĕрлет.
Пыл шăрши кĕрет.
Чĕлтĕр çулçăсем —
Вĕлтĕр çунатсем —
Хускалмаççĕ-ха,
Сас тумаççĕ-ха.

Ҫамрӑкрах турат
Симӗсрех тӑрать.
Эй, йӑмра, йӑмра!
Темшӗн чунӑмра
Кӗвӗ вӑранать,
Кӗвӗ шӑранать.
Ман шӑхличӗпе
Шӑнкӑрч сассипе
Шӑхӑртас килет,
Сас парас килет.
Пӗчӗк туратне
Памӑн-ши мана?

Г. Юмарт
**Пирӗн ялта**

Пирӗн ял йӑмраллӑ,
Йӑмрисем йӑваллӑ,
Йӑвисем кураклӑ,
Куракӗсем чӗпӗллӗ,
Ах, чӗшшсем —
чӑр! та чар!

Г. Юмарт
**Кӗтерне**

Илсе пачӗ те анне
Пурҫӑн тумлӑ пукане,
Тирпейлерӗм краватьне,
Тек чупатӑп ун патне.
Ачашлатӑп ун ҫӳҫне,
Ҫитеретӗп ҫимӗҫне.
Е юрлатпӑр хӑш чухне,
Е ташлатпӑр ташшине.
Вӑл итлет эп хушнине,
Тӑн! тӑнлать каланине.
Вӑл ман пепкем вырӑнне,
Ячӗ унӑн — Кӗтерне.

Г. Юмарт
**Хурсем**

Кикак-кикак шурӑ хур,
Ҫӳл ту ҫинче кашкӑр пур,
Шалӗсем ун шак-шак-шак!
Сире тытса кайӗ ак.
Вӗҫсемӗрччӗ шурлӑха,

Ан лексемĕр хурлăха.
Тимлĕ пулăр ту çинче,
Тилĕ-кашкăр патĕнче.

Г. Юмарт
**Автан**

Кикириккик сар автан
Кикки-рик! тесе çӳретт
Пырне хырса кăшкăрать,
Ачи-пчи выçса вилет.
Ку арманне авăртмасть,
Çăнăхне хатĕрлемест.
Çăкăр мĕнрен пĕçерес?

Г. Юмарт
**Купăс**

Ман купăсăм ăçтарах?
Вăл иккен хам аллăмрах.
Ун тӳмине пуссанах
Ахăлтатать ах-хах-ах!

Çук иккен, вăл купăс мар,
Хам пепкем кулма хастар.
Эп купăсçă пулăп тет,
Ташлăп, юрлăп, выльăп тет.

Г. Юмарт
**Ик çура**

Чупрĕ тухрĕ — пĕлĕр-и? —
Пĕчĕкçеççĕ тем çури.
Хăй ун-кун пăхса илет,
Шур çăмха пек сиккелет,
Çĕр çумне те йăпшăнать,
Сыххăн-сыххăн шăвăнать.
Ăнсăртран хура çăмха
Сикрĕ пычĕ çывăха.
Хай пуçларĕç выляма —
Пĕр-пĕрне хăвалама.
Шурри тарчĕ тĕм хыçне,
Мяв-мяв! терĕ вăл лешне.
Хамлатса çӳрет хури,
Лешĕ халь чĕнмест юри.

Г. Юмарт
**Тыт мана!**

Эй, чуп, хăвала!
Пирĕнпе пĕрле выля!

Уруна мĕн-ма аран
Сĕтĕрсе утса пыран?
Чирлĕ-чирлĕ сын пекех
Эс çӳретĕн тек-текех.
Пул вăр-вар, ан пул лӳппер,
Спортсмен пек эс ут чипер.
Эй, чуп, хăвала!
Пирĕнпе пĕрле выля!
Эпĕ тарăп — тыт мана,
Тытăп эп вара сана.

Г. Юмарт
**Сив хĕле ал сулăр!**

Хĕл юр сапрĕ, сапрĕ
Пӳлмене шăлса.
Çĕнĕрен шуратрĕ
Таврана савса.

Ашшăн уйрăласшăн
Вăл пирĕнпеле:
Çупăрлать ачашшăн
Мамăк аллипе.

Шурă юрĕ ӳкрĕ, нӳрĕ,
Шултăра, çемçе.
Эй, тухсамăр, çӳрĕр
Ун ытамĕнче!

Перкелешĕр, выльăр
Юлашки юрпа,
Сив хĕле ал сулăр
Ырă кăмăлпа.

Г. Юмарт
**Кăсăя**

Чăнк-чăнк-чăнк!
Такам шаккать.
Пăхрăм та чӳречерен —
Кăсăя иккен таккать.
Йыхăрать мана пӳртрен:
- Эй!
Чи-чӳ!
Чĕв-чĕв-чĕй!
Кур-ха:

Кунĕ —
Хип-хитре.
Урама тухсамччĕ,
Эй!
Мĕн сĕнксе ларан пӳртре?..
Ах, чăнах та урамра
Ытарма та çук аван!
Шыв шаркать-мĕн лапамра,
Йăл кулать хĕвел паян.
Кăсăя туссен сасси
Янăрать çинçен-çинçен.

Г. Юмарт

**Кайăк юрри**

Чи-чĕв-чи! Чи-чĕв-чи!
Ан пырсам тĕм патне,
Ан хăрат чĕпсене!
Ах, ан тив, Ах, ан тив
Эсĕ ман йăвама,
Хĕрĕме-ывлăма!
Эсĕ, улăп этем,
Мĕскĕне шеллесем:
Эп, ан тив, пĕчĕкскер,
Сан пекех чĕрĕскер.
Пурăнасшăн эпир,
Савăнасшăн каç-ир.
Ах, ан тив! Ах, ан тив!

Г. Юмарт

**Хĕрлĕ кайăк**

Кăсăя юман çинче
Сиккелерĕ пĕр кана.
Ешĕл çулçă хушшинче
Çăмăл мар тупма ăна.
— Симĕс кайăк, акă кур:

Симĕс ун çуначĕсем,
Пĕсехи çинче ун пур
Сарă-сарă тĕкĕсем, —
Терĕ пĕчĕк Эрнепи.
— Эпĕ — хĕрлĕ кайăк, — тет.
Шăлкалать хăй тумтирне,
Кăсăя пек сиккелет.
Хĕрлĕ тутăр та пушмак,
Хĕрлĕ тĕслĕ ун кĕпе.
Кайăк пек çунат сулма
Хăлаçланать аллипе.

Юхма Мишши

**Ăмăрт кайăк**

Ăмăрт кайăк, ăмăрт кайăк,
Эс таçта вĕçсе каян.
Ил мана хăвпа пĕрле
Тӳпене çӳле-çӳле.

Юхма Мишши

**Вăкăр**

Никама ямасть патне,
Хăмсарать мăйракипе.
— Кашкăртан пăрусене
Эп сыхлап, — тет, — кунĕпе.

Юхма Мишши

**Кăркка**

Кам та кам шăхăрать,
Вăл мана тарăхтарать.
Пырса сăхăп эп ăна —
Чи курайман тăшмана.

Юхма Мишши

**Кушак**

Мяу, мяу хӑй кӑна
Мансӑрах хӑйма ҫиет.
Кун пек тутлӑ хӑймана
Манӑн та ҫиес килет.

Юхма Мишши

**Лаша**

Эй, ачам, атя утлан,
Ҫил пек вӗҫтерер.
Иксӗмӗр акатуйран
Парнепе килер.

Юхма Мишши

**Пӑрчӑкан**

Ман пек маттур хӗрсене
Пӑрчӑкан пек тееҫҫӗ.
Эп ҫапла пит маттуррине
Вӗсем ӑҫтан пӗлеҫҫӗ?

Юхма Мишши

**Ҫерҫи**

— Чим-чим-чим! — тет ҫерҫи.
— Кам кунта пахча хуҫи?
Кантӑр та акма пӗлмен,
Тырӑ-пулӑ ӳстермен.

Юхма Мишши

**Ҫӗлен**

Манран ҫынсем пурте хӑраҫҫӗ,

Мана усал тесе вăрçаççĕ.

Калам-ха чăннине, туссем,

Сăхмастăп эп тĕкĕнмесен.

Юхма Мишши

**Шăпчăк**

Таврара унччен пит шăпчĕ.

Вĕçсе килтĕм те эп, шăпчăк,

Тĕрлĕ юрă шăрантартăм, —

Çынсене хаваслантартăм.

Юхма Мишши

**Кача-кача качаки**

— Кача-кача-качаки,
Шăлтăр-шăлтăр мăйраки,
Тăпăр-тăпăр тяпписем, —
Ăçта каян, пĕлтерсем?

— Эпĕ ялти кĕтӳ пуç,
Часах килет шурăмпуç,
Ертсе мĕн пур выльăха
Каяс тетĕп улăха.

Юхма Мишши

**Ĕне**

Му-ук! та му-ук! тесе ĕне
Васкаса утать килне.
Çитересшĕн вăл сĕтне
Пирĕн пĕчĕк пепкене.

Юхма Мишши

**Пăтă пĕçерет чакак**

Чак-чак чакак,
Пăтă пĕçерет чакак,
Хӳрипеле пăтратать,
Сăмсипе тăвар ярать,
Хăнасем пухма шутлать,
Ик урипе шут хурать:
Чĕнетĕп чанана,

Чĕнетĕп автана.
Куракa чĕнместĕп,
Çăхана чĕнместĕп.
Тата кама чĕнес?
Çак пăтта çитерес?
Шутлать-шутлать,
Çапах шутласа пĕтерейместь.
Шутлать-шутлать,
Тата кама чĕнмеллине пĕлеймест.
Чĕн мана
Хăнана.
Вĕрентĕп сана
Шут шутлама.
Пулăшăп сана
Хăна пухма.

Юхма Мишши
**Парне**

Ӳкеретĕп, ӳкеретĕп,
Иртенпех эп тертленетĕп.
Касрăм лартрăм шурă пӳрт,
Ытарма çук чаплă пӳрт:
Тултан сакăр кĕтеслĕ,
Шалтан тăватă кĕтеслĕ.
Çичĕ кантăк кастартăм,
Кĕленчине ларттартăм.
Шурă пӳртре вылятăп,
Чӳречерен пăхатăп.
Анне ĕçлет юнашар,
Манран пĕртте инçе мар.
Анне, сансăр ман кунта
Ларас килмест тупата.
Кĕр кунта
Ман пата.
Анне, сана чĕререн
Парне пултăр çак кермен.
Эпир иксĕмĕр вара
Пурăнар ак шур çуртра.

Юхма Мишши
**Ыйтрĕ ывăлăм манран**

Ыйтрĕ ывăлăм манран:
— Тĕрлĕ тĕслĕ пĕлĕтсем
Каçхине ăçта çывраççĕ?
— Йăлăмра,
Атăл леш енче.
Тĕрлĕ тĕслĕ пĕлĕтсен,
Ывăнми çул çӳренсен,
Унта пур хайсен керменĕ.
Çутă уйăх çав çуртра

Пурӑнать тет нянькӑра.

Ҫут хӗвел канма кайсан,
Сӑрт хыҫне анса ларсан
Пӗлӗтсем ыйха путаҫҫӗ.
Ҫутӑ уйӑх ҫеҫ вара
Ҫывӑрмасть тет ҫав ҫуртра

Сиктерет вӑл сӑпкине
Юрласа хӑй юррине.
Уйӑх юррине илтсессӗн
Сил ачи те ҫав ҫуртрах
Ҫывӑрма выртать часрах...

Ыйтрӗ ывӑлӑм манран:
— Тӗрлӗ тӗслӗ пӗлӗтсем
Ирхине епле тӑраҫҫӗ?
Хуравларӑм:
— Ҫут хӗвел
Вӑратать хӑй вӗсене.

Юхма Мишши

**Хӑрамастӑп сивӗрен**

Сивӗрен те хӑрамастӑп,
Урама тухса чупатӑп.
Эп текех пӗчӗк мар,
Эп хӑравҫӑ та мар.

Хӗл Мучи пите-куҫа
Чӗпӗтет те чӗпӗтет.
Кӗрӗк аркине уҫать,
Пилӗкне шӑнтам-ха тет.

Хӑрамастӑп сивӗрен
Пурпӗрех.
Ярӑнатӑп сӑрт ҫинчен
Пурпӗрех.
Ҫунашка ҫине ларатӑп,
Сил пек вӗҫтерсе анатӑп.

Сил ачи хӑлхаран
Шӑхӑрать.
Пит-куҫран та мӑйран
Тӑрмалать.

Пӗр-пӗччен пулсассӑн та,
Ҫав тери шӑнсассӑн та
Урамран тарса халех
Эп кӗместӗп пурпӗрех.

Юхма Мишши

**Шурут**

Шурă юр пек ман Шурут.
Çăлтăр пур çамки çинче,
Хура йĕр — урисенче.
Шурă хут пек ман Шурут.
Ташласа кăна тăрать,
Пуçне вĕçĕмсĕр ухать.
Вăхăт-вăхăт кĕçенет, —
Ял урамĕ чĕтренет...
— Мĕн пулчĕ сана, Шурут?
— Акатуй пуçланасса кĕтетĕп.
Хам пата лашасене чĕнетĕп.
— Мĕн тума чĕнетĕн, Шурут?
— Ăмăртма. Ăмăртура мала тухма.
— Мĕншĕн пит мала тухасшăн эс, Шурут?
— Парне илме.
— Мĕншĕн парне кирлĕ-ха сана, Шурут?
— Сана парнелеме.
Епле лайăх ут пур ман.
Халиччен,
Çак таранччен
Ун пек чаплă ут курман.

П. Ялкир

**Ирхи зарядка**

Илемлĕ плошадка
Пĕве хĕрринче.
Кĕтет физзарядка
Пире ир çинче.
Епле сывлăш уçă!

Хӗвел йӑл кулать.
Строя пирӗн ушкӑн
Васкавлӑн тӑрать.
Команда парсассӑн
Хавас ачасем.
Чӗкеҫ ҫунатланнӑн
Выляҫ аллисем.
Зарядка тӑватпӑр
Эпир ирсерен
Вӑй-халлӑ та паттӑр
Пулма пӗчӗкрен.

П. Ялкир

**Качака**

Пахчана пӗрре васкавлӑн
Качака пырса кӗрет.
Ҫимӗҫе калать ҫав каскӑн:
«Эп ҫиетӗп, — тет, — сире:
Купӑста, салат,
Сельдерей, шпинат».
Вӑрӑм хулӑ илтӗм эпӗ
Ҫаптарма качакана.
-Ҫимӗҫ ӳстерме сӗнетӗп
Сӑтӑрҫа хӑйне ӑна:
Купӑста, салат,
Сельдерей, шпинат.

П. Ялкир

**Семье**

Пӗрре — асанне,
Иккӗ — асатге,
Виҫҫӗ — атте,
Тӑваттӑ — анне,
Пиллӗк — Валя аппа,
Улттӑ — шӑллӑм, Ҫтаппан,
Ҫиччӗ — эпӗ, Клавье.
Ак пӗтӗм ҫемье.

П. Ялкир

**Тăмра**

Тинкĕл-тинкĕл тăмра
Тинкĕлтетет аллăмра.
Тантăш, эсĕ ташла,
Тăпăртат чăвашла.

П. Ялкир
**Параппан**

Ман аппаçăм — параппанçă —
Çапнăран
Пăнтăр-пăнтăр сасă пачĕ
Параппан.

П. Ялкир
**Купăс**

Ай ку купăс питĕ лайăх!
Ăна эп те янратайăп.
Тăскалам-и пĕрмине,
Эсĕр юрлăр юррине.

П. Ялкир
**Ташăçсем**

Эпир ăста — юрăра,
Пултаруллă — ташăра.
Ри-та, ри-та, рита-та,
Пултаруллă ташăра.

П. Ялкир
**Савăнăç**

Эс утан,
Эп те утап.
Пускалаççĕ урасем
Тяп-тяп-тяп.

Эс ташлан,
Эп те ташлап.
Ал çупаççĕ юлташсем
Шап-шап-шап!

Эс юрлан,
Эп те юрлап.
Иккĕн юрлама аван.
Ай-я-я!

Эс савнан,
Эп те савнап.
Эх, юрлас килет ялан.

Ля-ля-ля!

П. Ялкир
**Ташă**

Алла-аллăн тытăнса
Тăтăмăр карталанса.
Ташă кĕвви калатпăр,
Пурте алă çупатпăр.

Харсăр ташăçă, Кĕçтук,
Ташлама часрах эс тух.
Кĕç сан хыççăн эпĕр те
Ташша тухăпăр пурте.

Пит аван ташлать Кĕçтук.
Эх, унран маттурри çук!
Алă çупăр харăсрах.
Ташлăр пурте хавасрах.

П. Ялкир
**Эмел**

Амăш ĕçтересшĕн
Павăла эмел:
«Ĕç те — час вăй илĕн
Тет сана хĕвел».

Кантăкран шаккарĕ
Уçă çил ăна:
«Выляма чĕнетĕп
Сывалсан кăна».

Павкăн вылямашкăн
Пит каяс килет.
Йӳçĕ-çке эмелĕ —
Вăл çавах ĕçет.

П. Ялкир
**Çумăр çăвать**

Тахăш пĕлĕт витрине
Тăкса ячĕ ирхине.
Шăпăр-шăпăр
Ăшă çумăр
Шăварать уй-хирсене.
Нӳрĕк ыйтнă тырăсем,

Çумăрпа шав киленсе
Çил вĕрӳçĕн
Хӳхĕм-хӳхĕм
Хум чуптарчĕç чӳхенсе.
Çичĕ тĕслĕ асамат
Пусă урлă карăнать.
Вăл ир кӳлĕм
Хĕпĕртӳллĕн
Хир ешернине сăнать.

П. Ялкир

**Палăк**

Чыс туса пуçа пĕкетпĕр
Хаклă палăк умĕнче.
Чечексем çитĕнтеретпĕр
Тăрăшса ун çумĕнче.
«Салтаксем кунта çывраççĕ», —
Тет хуллен ват асатте.
Утнă-мĕн вĕсем вут витĕр
Чаплă Çĕнтерӳ патне.
Паттăрсем мире сыхланă,
Хунă пирĕншĕн пуçне.
Пăхаттирсене кам манĕ?
Палăк упрĕ ыр ятне.

В. Ямаш

**Ăшă çумăр**

Тĕксĕм пĕлĕт хăпарать
Ешĕл йăлăмран...
Шăпăр-шăпăр шăварать
Çĕр питне, куран.
Шăркаланнă ыраша

Сарă тĕс кĕрет.
Инçетре вылять ăрша,
Йăл та йăл çиçет.
Çĕн вăй-халлăн ешерет
Ытарми тĕнче.
Ăшă çумăр... Хĕпĕртет
Пурте çĕр çинче.